ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1958 çул Июль 8 юнкун № 132 (9041)

36-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Тăван çĕршывра (1 стр.).
РЕСПУБЛИКĂРИ ХУЛАСЕМПЕ РАЙОН ЦЕНТРĔСЕНЧЕ: А. Смирнов.—Ӳссе чечекленекен Канаш (1 стр.).
Ю. Борисов.—Совет государствине ывăнма пĕлмесĕр тĕреклетер (2 стр.).
Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕнче (2 стр.).
Н. Албутов. — Вăрман промышленноçĕнче ялан ĕçлекен кадрсем çителĕклĕ пулмалла (3 стр.).
П. Щипцов. — «Заготзерно» пункчĕ хатĕр мар (3 стр.).
Лайăх çул йĕршĕн! (3 стр.).
РЕДАКЦИЕ КИЛНЕ ÇЫРУ: А. Кошечкин.—Санитари йĕркисене пурнăçласа пымалла (3 стр.).
Итали халăхĕ мирпе социальнăй улшăнусен правительстви туса хума ыйтать (4 стр.).
Китайри Коммунистсен партийĕн ыйхĕ ӳсет (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен Англи комитечĕн исполкомĕ пĕлтерни (4 стр.).
Бивен тухса калани (4 стр.).
Б. Плетнев.—Ут-тир чирĕсемпе кĕрешесси (4 стр.).

Совет хĕрарăмĕсем— коммунизм строительствине активлă хутшăнакансем

Совет çĕршывĕнче хуçалăх, государство, культура тата обществăлла-политикăлла пурнăçăн мĕнпур облаçĕсенче хĕрарăм арçынпа пĕр тан пуласси историре малтанхи хут пурнăçа кĕртнĕ. Социализмла обществăн çак аслă çĕнтерĕвне СССР Конституцийĕнче закон йĕркипе çирĕплетсе хунă.

Пирĕн çĕршывра хĕрарăмăн государство влаçĕн органĕсене суйлама тата суйланма право пур, унăн ĕçлев, кану, вĕренӳ прави пур, вăл хăйĕн кун-çулĕн хуçи, коммунизм строительствине активлă хутшăнакан çын пулса тăрать. Совет законĕсем хĕрарăма—ача амăшне пысăк вырăна хураççĕ, хĕрарăмăн ĕçне, ача амăшĕсемпе ачасене сыхласа тăраççĕ.

Коммунистсен партийĕ, Совет правительстви, пирĕн аслă çулпуçăмăрсем тата учителĕмĕрсем В. И. Ленинпа И. В. Сталин Совет государствине туса хурсан малтанхи кунсенчех работницăсем, хресчен хĕрарăмĕсем тата служащисем хăйсен творчествăлла вăйĕпе пултарулăхне пур енчен те аталантармалла, хăйсен политикăлла тата культурăлла шайне ӳстермелле, çĕршыва ертсе пырас ĕçе активлă хутшăнмалла тăвассишĕн питех те тимлĕн тăрăшнă.

Хĕрарăмсем пĕр тан правалла пулнине пурнăçа кĕртес ĕçе Коммунистсен партийĕ яланах вĕсене обществăшăн усăллă ĕçе, обществăлла-политикăлла пурнăçа, парти, совет тата хуçалăх аппаречĕн пур сыпăкĕсенче те практикăлла ĕçе хутшăнтарассипе сыхăнтарнă тата халĕ те çавăнпа сыхăнтарать.

Парти совет хĕрарăмĕсене ĕçе тата обществăлла-политикăлла пурнăçа активлă хутшăнмалли анлă çул çине илсе тухрĕ. Çĕршывăн халăх хуçалăхĕнче совет хĕрарăмĕсем ĕçлемен, вĕсен творчествăлла шухăшĕ çăлкуç пек тапса тăман участок пачах çук. Хĕрарăмсем промышленноçра, транспорт çинче тата стройкăра ĕçлекенсен чылай пысăк пайĕ шутланаççĕ. Миллионшар хĕрарăмсем колхозсенче, МТС-сенче тата совхозсенче хастарлăн ĕçлеççĕ, вăйлă тырпул пухса илеççĕ, обществăлла выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстереççĕ. Социализмла Тăван çĕршывăн нумай патриоткисем тăрăшнипе пирĕн çĕршывăн наукипе техники пуянланса пырать, литературăпа искусство малалла аталанать.

Хĕрарăмсен массисене производствăлла тата обществăлла-политикăлла ĕçе активлă хутшăнтарса, Совет государстви вĕсене хăйсен вăйĕпе пултарулăхне палăртма кирлĕ мĕнпур условисене туса парать, вĕсен ĕçри тата йăлари условийĕсене пĕрмаях лайăхлатса пырать, ача-пăча учрежденийĕсемпе сывлăх учрежденийĕсен, обществăлла столовăйсен, прачечнăйсен, тумтир çĕлекен мастерскойсен шутне малалла ӳстерсе пырать. Ача амăшĕсемпе ачасемшĕн тăрăшасси пирĕн пĕтĕм халăх ĕçĕ пулса тăрать.

Коммунизм строительствин интересĕсем хĕрарăмăн обществăлла производствăри вырăнне ытларах та ытларах ӳстерсе пыма хушаççĕ. Парти, совет, профсоюз тата комсомол организацийĕсен тивĕçĕ—хĕрарăмсене промышленноçри, транспорт çинчи, строительствăри, ялхуçалăхĕнчи обществăлла-производствăлла ĕçсене малалла хутшăнтарса пымалла тăвасси, вĕсен политикăлла тата культурăлла шайне ӳстерессишĕн пур майсемпе те тăрăшасси, вĕсене социализмла Тăван çĕршыва чĕрĕрен парăнса ĕçлеме, халăхсем хушшинчи туслăх шухăшĕпе тата политикăлла сыхă пулма вĕрентесси пулса тăрать. Çак никĕс çинче кăна чи лайăх работницăсене, колхозницăсене, интеллигенткăсене парти, совет тата хуçалăх органĕсенчи ертсе пырас ĕçе лартмалли майсем анлăланса пырĕç.

Пирĕн хĕрарăмсен производствăри тата обществăлла-политикăлла ĕçри активлăхĕ çултан çулах ӳссе пырать. Анчах та ăна пур чухне те тата пур çĕрте те кирлĕ пек пулăшмаççĕ-ха. Парти, совет, профсоюз тата комсомол организацийĕсенчен хăшпĕрисем хĕрарăмсене обществăлла-политикăлла пурнăçа активлă хутшăнтарни мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине хакламаççĕ, хĕрарăмсен активне вĕрентсе ӳстерес тĕлĕшпе япăх ĕçлеççĕ, работницăсене, колхозницăсене, интеллигенткăсене ертсе пырас ĕçе лартассишĕн сахал тăрăшаççĕ.

Кун пек фактсем, сăмахран, Узбек ССР-ĕнче пур. Унта предприятисенче работница-узбечкăсен шучĕ ӳсмест. Республикăри мĕнпур рабочисемпе работницăсем хушшинче хĕрарăм-узбечкăсем пысăк мар процент шутланаççĕ. Узбекистанри Компарти Центральнăй Комитечĕ, республикăри партин нумай обкомĕсем, хула комитечĕсем тата райкомĕсем хĕрарăмсене политикăлла воспитани парас, узбек нацинчен хĕрарăм кадрсем вĕрентсе ӳстерес тата вĕсене ертсе пырас ĕçе лартас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Юлашки çулсенче ертсе пыракан ĕçре ĕçлекен узбечкăсен шучĕ ӳсмен кăна мар, чылай чакнă. Узбечкăсене колхозсенчи ертсе пыракан вырăнсене лартас ĕç уйрăмах япăх тăрать: кунта колхоз председателĕсем, бригадирсем, ферма заведующийĕсем хушшинче хĕрарăмсем сахал.

Ĕç çапла япăх пынине малалла тӳссе тăма юрамасть. Парти, совет, профсоюз тата комсомол органĕсен хĕрарăмсене парти, совет, хуçалăх организацийĕсемпе обществăлла организацисенчи ертсе пырас ĕçе хăюллăнрах лартмалла. Çакна тунă чухне кадрсене суйласа илес тĕлĕшпе парти кăтартса панă йĕркесене çирĕппĕн тытса пымалла. Хĕрарăмсене ертсе пырас ĕçе вĕсен пултарулăхне шута илмесĕр, ахаль приказсем, хушусем панипех лартни, паллах, тĕрĕс мар пулать. Ĕç çине çапла пăхни ертсе пырас ĕçе лартас идейăна пăсни çеç пулать. Халĕ, ертсе пырас ĕç умне пысăк требованисем лартнă вăхăтра, парти организацийĕсем ертсе пырас ĕçе лайăх хатĕрленнĕ, культурăллă, хăйсен ĕçне лайăх пĕлекен хĕрарăмсене лартма тивĕçлĕ. Совет влаçĕн çулĕсенче парти хĕрарăмсенчен халăх хуçалăхĕн тĕрлĕ отраслĕсенче ĕçлекен специалисткăсем питĕ нумай вĕрентсе ӳстерчĕ. Хальхи вăхăтра пирĕн аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă хĕрарăм-специалистсем тăхăрçĕр пин ытла шутланаççĕ. Парти организацийĕсен тивĕçĕ хуçалăхпа культура строительствин пур участокĕсенче те çак кадрсемпе пĕлсе тата тĕрĕс усă курасси пулать. Хĕрарăмсенчен вăтам шкулсемпе аслă шкулсенче вĕрентсе кадрсем хатĕрлес ĕç çине ытларах тимлĕн пăхмалла. Çакă Вăтам Азири республикăсемшĕн уйрăмах кирлĕ, унта хĕрачасенчен чылайăшĕ çичĕ çул вĕренмелли, вăтам тата специальность паракан шкулсенчен, çавăн пекех аслă шкулсенчен вĕренсе тухмасăрах вĕренме пăрахаççĕ.

Ĕçсыннисен социализмла ăнланулăхĕ — коммунизм строительствине ăнăçлă туса пымалли тĕп факторсенчен пĕри. Хĕрарăмсене социализмла ăнланулла пулма вĕрентесси пурнăçри чи кирлĕ задача пулса тăрать. Кунта партипе комсомол организацийĕсем хĕрарăмсем хушшинче политикăлла ĕçе пĕрмаях туса пымалли çинчен, вĕсен политикăлла тата культурăлла шайне ӳстермелли çинчен, капитализмран тата феодалсемпе байсенчен юлнă йăласене хирĕç татăклăн кĕрешмелли çинчен сăмах пырать.

Уйрăм облаçсенче хăшпĕр чухне хĕрарăм тивĕçне ним вырăнне хуман кивĕ йăласем çаплах палăраççĕ-ха. Самарканд тата Бухара облаçĕсенче çав кивĕ йăласем пусмăрланине пула хăшпĕр работницăсене, колхозницăсене тата служащисене çемьере тан мар условисене лартнă, çавна пула вĕсем обществăлла ĕçрен ирĕксĕрех уйрăлса каяççĕ, ĕçлеме е вĕренме пăрахаççĕ.

Партипе совет организацийĕсем çавăн пек фактсенчен пăрăнса иртме тата вĕсене хирĕç пĕр килĕшсе тăмасăр кĕрешмесĕр пултараймаççĕ. Хĕрарăмсем хушшинче организацилле, политикăлла ĕçе тата культурăпа çутĕçне япăхтарса яни, çĕршыври хăшпĕр районсенче хĕрарăмсем тĕлĕшпе феодалла-байла йăласем пĕтсе çитменни хĕрарăмсене коммунизмла воспитани парас ĕçре питех те пысăк сиен кӳнине шута илмесĕр тăма юрамасть. Хĕрарăмсем хушшинче ĕçлесси—парти организацийĕсен чи пысăк задачисенчен пĕри. Парти комитечĕсен хĕрарăмсем хушшинче ĕçлеме ятарласа тунă пайсем пур çĕрте хĕрарăмсене политикăлла воспитани парас ĕçе пĕтĕмпех çав пайсене шанса парса, вăл пайсене ĕçлеме пултаракан кадрсемпе çирĕплетмесĕр, вĕсен ĕçне тĕрĕслесе тăмасăр йăнăш тăваççĕ.

Парти, профсоюз тата комсомол организацийĕсенчен кашниех хĕрарăмсем хушшинче политикăлла ĕçе лайăхлатассишĕн, хĕрарăмсенчен актив вĕрентсе ӳстерессишĕн, работницăсен, колхозницăсен, служащисен ĕçри тата йăлари условийĕсене малалла лайăхлатса пырассишĕн яланах тата тимлĕн тăрăшмалла.

Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе совет халăхĕ пирĕн çĕршывра коммунизм тумалли историллĕ задачăна ăнăçлă пурнăçласа пырать. ССР Союзĕнчи мĕнпур ĕçсыннисемпе пĕрле совет хĕрарăмĕсем, социализмла аслă Тăван çĕршывăн мухтавлă патриоткисем коммунизмшăн кĕрешес ĕçе активлă хутшăнаççĕ.

(«ПРАВДА» хаçатăн июлĕн 7-мĕшĕнчи умстатьи).

Тăван çĕршывра



Сталинградри трактор заводĕнче гусеницăллă газогенераторлă ГБ-58 тракторсем нумай туса кăларма тытăннă. Ку трактор йывăç татăкĕсем тата торф брикечĕсем çунтарса ĕçлет.
УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: газогенераторлă тракторсем завод килкартинче.
А. МАКЛЕЦОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Сталинградри гидростроительсен çитĕнĕвĕ

ВОЛЖСКИЙ (Сталинград облаçĕ), июлĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Сталинградри ГЭС строительствинче хальхи вăхăтра котлованран шыв кăларас, пĕве тумалли вырăнтан тата гидростанци çурчĕ пулмалли вырăнтан тăпра кăларас ĕç пырать.

Июнь уйăхĕнче Хромыхпа Мошкин юлташсем ертсе пыракан агрегатсен коллективĕсем лайăх ĕçленĕ. Çак агрегатсем паян котлованран Aтăла 180 пин кубометр шыв уçласа кăларнă.

Симĕс утрав çинче ĕçлекен механизаторсем паян экскаваторщик И. Елисеев чаплă çĕнтерӳ тунине палăртнă. Вăл стройкăра малтанхи кунсенчен пуçласа ĕçлет. Хăй ĕçлеме пуçланăранпа паянхи куна çитиччен вăл «Уралец» экскаваторпа ĕçлесе 1 миллион кубометр тăпра кăларнă.

Силос хывмалли плана тултарнă

ЧКАЛОВ, июлĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Облаçра Троицкий район силос хывмалли плана пуринчен малтан тултарнă. Сĕтек апатсем иртнĕ çулхинчен 20 процент ытларах хатĕрленĕ. Плана пĕтĕмпе тенĕ пекех хăй тĕллĕн ӳсекен курăксене пухса хатĕрленипе тултарнă. Колхозсемпе совхозсем вăрмансенче, çырмасенче курăксем нумай пухса хатĕрленĕ.

Халĕ чылай колхозсем силослăх акнă культурăсене пухса силос хывма тытăннă. Çакă вăл тырпул пухса кĕртме тытăниччен силос хывмалли çулталăк планне икĕ хут иртттерсе тултарма май парать.

Силос хывас пур ĕçре те машинăсемпе анлăн усă курнă.

Çĕнĕ машинăсем

БОРОВИЧИ (Новгород облаçĕ), июлĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Боровичири механически завод коллективĕ çĕнĕ конструкципе машинăсем туса кăларассине вăйлатса пырать. Урапа кустăрмисене хĕртмесĕр тимĕр тыттармалли лайăхлатнă гидравлически прессен малтанхи ушкăнне туса кăларнă. Çак çĕнĕ йышши пресспа пĕр смена вăхăтĕнче 500 кустăрмана тимĕр тыттарма пулать.

Паян Усть-Каменогорск ГЭС-ĕнче

УСТЬ-КАМЕНОГОРСК, июлĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Каç-каç Аблакет сăрчĕсем хушшинче пур çĕрте те çутă ялкăшса тăрать. Ку вăл—Усть-Каменогорск гидроэлектростанци парса тăракан электричество çути.

ГЭС ĕçлеме пуçланăранпа пурĕ те темиçе кун кăна иртрĕ-ха. Стройкăран бетонщиксем, арматурщиксем, опалубщиксем тухса кайма та ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ. Паян тепĕр стройкăна тăпра тата чул кăларакан рабочисен коллективĕ тухса кайнă.

Гидроэлектростанци çурчĕсенче, пăрахутсем çӳремелли шлюз управленийĕнче çынсем нумай. Агрегатсем пĕр тикĕс ĕçлесе тăраççĕ. Кăткăс техникăна ĕçлеттерсе тăракансем, пуринчен ытла, çамрăксем. Матвеев, дежурнăй инженер Кирли тата ыттисен сменинчи электриксен коллективĕсем тăрăшса ĕçлеççĕ.

Шлюзсем витĕр 20 яхăн пысăк пăрахутсемпе баржăсем кăларса яма та ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ. Коллектив суднăсене шлюзсем витĕр иртттерсе тăрас вăхăта кĕскетме тăрăшать.

Çĕршывра тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕçсем вăйланса пыраççĕ

ОЛЬГИНСКОЕ (Ставрополь крайĕ). Крайри тырпул нумай туса илекен Либкнехт районĕнче тырпул пухса кĕртме тытăннă. Богословски МТС ĕçлесе тăракан «Красное знамя» колхозра 4.500 гектар çĕр лаптăкĕ çинче кĕрхи тулă пулса çитнĕ. Колхоз хирĕсенче ĕçлеме 25 комбайн тухнă.

Механизаторсем ушкăнпа ĕçлесе, тырпул пухса кĕртмелли срока чылай чакараççĕ, çав вăхăтрах тырпул хире тăкăнса юлассине сахаллатаççĕ.

ТИХОРЕЦК (Краснодар крайĕ). Районти колхозсем тырпул пухса кĕртме масăллăн тытăннă. Пĕр кун хушшинче 850 гектар çинчен тулă пухса кĕртнĕ. Кăçал пур çĕрте те тырă иртнĕ çулхинчен гектар пуçне 3—5 центнер ытларах тухать.

НАЛЬЧИК. Кабардин АССР-ĕнче кĕрхи урпа вырма тытăннă. Баксан районĕнчи колхозсем пуринчен малтан урпа пухса кĕртме тата çапма тытăннă. Мĕнпур тырпула комбайнсемпе пухса кĕртеççĕ. Механизаторсем çавăн пекех кĕрхи тулă пухса кĕртме тытăннă.

Кабарда тăрăхĕнчи механизаторсем кăçал çак вăхăт тĕлне иртнĕ çулхинчен пĕр хут çурă ытларах тырпул пухса кĕртнĕ.

Июлĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС).

Планеристсен Пĕтĕм Союзри ăмăртăвĕ

КАЛУГА, июлĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта Пĕтĕм Союзри планеристсен ăмăртăвĕ пулса иртнĕ. Çантăлăк начар пулнă пулсан та, совет планерисчĕсем пысăк ăсталăх кăтартнă.

Судьясен коллегийĕ Украина ССР команди пĕрремĕш вырăн йышăннине палăртнă. Командăра спорт мастерĕ, тĕнчери рекордсмен В. Ефименко, планеристсем—М. Веретенников тата Н. Кислицкина пулнă. Командăна ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн кубокне тата пĕррĕмĕш степень диплом панă.

Спорт мастерне В. Хрыпов юлташа тата Киеври кинематографи институтĕнче вĕренекен студенткăна — Н. Кислицина комсомолкăна СССР абсолютнăй чемпионĕ ятне панă.

Планер спорчĕн чемпионĕ ятне çаксем илнĕ: малтанах палăртса хунă инçетри вырăна вĕçсе çитес тĕлĕшпе—тĕнчери рекордсмен В. Ильченко, çӳле вĕçсе хăпарас тĕлĕшпе — тĕнчери рекордсмен, спорт мастерĕ В. Ефименко, нумай вăхăт хушши вĕçес тĕлĕшпе — Мускаври авиаци институтĕнче вĕренекен студент Е. Африканов комсомолец.

Ăмăртура мала тухнă спортсменсене наградăлани

Июлĕн 6-мĕшĕнче Мускаври «Динамо» стадионĕнче велосипедпа Мускав—Харьков—Киев—Минск—Мускав маршрутпа чупса мала тухнă спортсменсене наградăсем панă.

Ăмăртура мала тухнă спорт мастерне Родислав Чижикова (Совет Çарĕн Центральнăй çурчĕн пĕррĕмĕш команди) çĕршыв чемпионĕн хĕрлĕ майкине парса наградăланă. Ăна çавăн пекех тата Харьковри велосипед завочĕ çирĕплетнĕ приз—инçете чупмалли велосипед тата «Огонек» журнал призне панă.

Совет Çарĕн Центральнăй çурчĕн мала тухнă пĕррĕмĕш командине кусса çӳрекен кубок панă.

Столицăри ĕçсыннисен асра тытмалли парнисене парса Гжатск—Мускав хушшинчи чупура мала тухнă спорт мастерне Виктор Вершинина (Совет Çарĕн Центральнăй çурчĕн пĕррĕмĕш команди), Анатолий Колесова («Зенит»), Николай Матвеева («Калев») наградăланă.

Ăмăртăва хутшăннă велосипедистсене Мускав çыннисем ăшшăн саламланă.

(ТАСС).

Республикăри хуласемпе район центрĕсенче

Ӳссе чечекленекен Канаш

1891 çулта, Рузаевкăпа Хусан хушшине чугун çул хывнă вăхăтра, Шăхран станци тунă. Пĕррĕмĕш империализмла вăрçă вăхăтĕнче, Арзамасран Хусан еннелле чугун çул хывсан, Шăхран икĕ çула пĕрлештерекен станци пулса тăнă. Апла пулсан та, революциччен Шăхран хуçалăхпа культура енĕпе аталанайман. 1901 çулта, чугун çул хывнăранпа вунă çул иртнĕ хыççăн та, кунта ултçĕр çын кăна пурăннă. Тĕрлĕрен пĕчĕк складсемсĕр пуçне урăх нимĕнле промышленность предприятийĕсем те пулман. Каярахпа пуçламăш шкул уçнă. Чирлĕ çынсем сывалма сакăр километрти Шăхасан больницине çӳренĕ. 1914 çулта учительсем хатĕрлекен семинари ĕçлеме пуçланă.

Революци хыççăн Европăпа Çĕпĕре çыхăнтаракан аслă çул çинчи станци хăватлăн аталанма пуçланă. 1920 çулта Шăхран станцине Канаш тесе ят панă. 1925 çултанпа Канаш—хула. 1927 çулта хулара район центрĕ вырнаçнă.

Пилĕкçуллăхсенче Канаш хăвăрт ӳсме пуçлать. Çав çулсенче хулара вагонсем юсакан завод, моторсем юсакан завод, промкомбинат, апат-çимĕç комбиначĕ т. ыт. те туса лартнă. Халĕ хулара вунсакăр предприяти ĕçлет. Вĕсем халăх хуçалăхĕ валли виççĕр тĕрлĕ япала туса кăлараççĕ. Хальхи вăхăтри Канашра чи хăватлă техникăпа пуянланнă çĕнĕ станци, пысăк депо тунă.

Промышленность аталаннă май хула кăнтăрпа хĕвелтухăç еннелле сарăлнă. Унта пурăнакансен йышĕ, революцичченхипе танлаштарсан, сакăрвунă хут ӳснĕ.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви пулăшнипе Канаш республика варринчи пысăк хула пулнипе пĕрлех, культурăлла центр та пулса тăчĕ. Учительсем хатĕрлекен институтра, марксизм-ленинизма вĕренмелли касхи университетра, сакăр вăтам шкулпа пуçламăш шкулсенче, механизаторсен шкулĕнче тата ытти курссенче ултă пин çын ытла вĕренет, виççĕр ытла учительсемпе ытти специалистсем ĕçлеççĕ. Учительсем хатĕрлекен институт, финанспа экономика техникумĕ Россия Федерацийĕнчи ытти облаçсем валли те пысăк квалификациллĕ кадрсем вĕрентсе кăлараççĕ. Хулара виçĕ хаçат тухать, икĕ типографи ĕçлет. Ултă клуб, 45 хĕрлĕ кĕтес, 34 библиотека, вĕсенче 200 пин ытла кĕнеке, пысăк парк, стадион, кинотеатрсем ĕçсыннисене культурăллă канма, хăйсен творчествăлла пултарулăхне тата пĕтĕмĕшле пĕлĕвне ӳстерсе пыма пулăшаççĕ.

Халăх сывлăхне сыхласси те тĕпренех улшăннă. Хулара икĕ больница, икĕ поликлиника, врач участокĕ, санитарипе эпидеми станцийĕсем, ачасен консультацийĕ, тĕрлĕрен лабораторисемпе медицина пункчĕсем, ача яслисемпе площадкисем нумай. Вĕсенче 45 врач, 160 фельдшерсемпе акушеркăсем ĕçлеççĕ.

Аслă Отечественнăй вăрçă хыççăн хула сăн-сăпачĕ тата хăвăртрах улшăнма пуçларĕ. Ĕлĕк пушă вырăн пулнă çĕрте çĕнĕ урамсем ӳссе лараççĕ. Виçĕ çул каярах Пушкин урамĕн ячĕ проектра кăна пулнă. Халĕ унта икĕ хутлă нумай хваттерлĕ чул çуртсем лартса тухнă. Çĕнĕ пилĕкçуллăхра вагонсем юсакан заводри рабочисем валли кăна çирĕм пин тăваткăл метр пурăнмалли çуртсем туса лартмалла. Вĕсенчен нумайăшне тунă ĕнтĕ. Кăçал çĕнĕ вăтам шкул туса пĕтереççĕ, мунча т. ыт. культурăпа йăла условийĕсене лайăхлатмалли çуртсем лартаççĕ. Чугун çул министерстви тата хулари коммунальнăй хуçалăх енĕпе те аллă хваттерлĕ çуртсемпе общежитисем тума пуçламалла. Кăçал çĕнĕ вокзал туса пĕтерсе, ĕçе яраççĕ.

Ĕлĕк Канаш урамĕсенче утса тухмалла мар пылчăк çăраннă пулсан, халĕ вĕсене çĕнĕ сăн кĕнĕ. Тĕп урамсене чул сарнă. Çулсен хĕррине тротуарсем тунă, темиçе пин тĕп йывăç лартнă, çĕнĕ скверсем тунă. Хулари транспорт вăйланать. Виçĕ çул хушши ĕнтĕ вокзалран пуçласа вагонсем юсакан завода çитиччен илемлĕ автобуссем çӳреççĕ.

Суту-илӳ ĕçĕ те лайăхланса пырать. Юлашки çулсенче çĕнĕ магазинсемпе киосксем нумай лартнă, столовăйсем уçнă. Чăвашторгăн Канашри уйрăмĕпе тĕрлĕрен ОРС-сем халăха куллен темиçе çĕр пин тенкĕлĕх тавар сутаççĕ. Таварсен ассортиментне нумайланса тата лайăхланса пырать. Часах Чăвашторг Ленин урамĕнче икĕ хутлă ресторан тума пуçлать, «Динамо» спорт обществи тĕрлĕ инвентарьсем сутмалли магазин туса пĕтерет.

Хальхи вăхăтра хулари промышленность предприятийĕсене вăйлатас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса иртттереççĕ. Апат-çимĕç комбинатне реконструкцилеме пуçланă. Çĕнĕ корпуссем туса хăватлă оборудовани лартнă хыççăн, вăл кондитерски япаласем туса кăларакан фабрика пулать. Моторсем юсакан заводра тимĕр-тăмăр шăратса деталсем тăвакан цех пулать. Ку вăра республикăри МТС-сем валли запаслă пайсем вырăнтах тума май парать. Промкомбинат тимĕр-тăмăр шăратса савăт-сапа тăвассине вăйлатнипе пĕрлех, Совет Союзĕн пур кĕтессисене те пичкесемпе цистернсем туса ăсатма пуçларĕ. Хулана электроэнерги парса тăрасси те аванланать. Çак çул вĕçленнĕ тĕле предприятисемпе рабочисен хваттерĕсене хальхинчен виçĕ пин киловатт ытларах энерги пама пуçламалла. Ун хыççăн пур предприятисем те яланхинчен нумай ытларах продукци туса кăларма тытăнаççĕ.

Хулана шыв парса тăрас, урамсене юсас, предприятисемпе пурăнмалли çуртпĕре хĕле хатĕрлес тĕлĕшпе те чылай ĕçсем туса иртттереççĕ. Çĕнĕрен лартакан пысăк çуртсене пурне те водопроводпа тата канализаципе сыхăнтараççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Канаш хулинчи Колхознăй урамра.
Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Хула хуçалăхне вăйлатма государство çуллен миллионшар тенкĕ укçа парать. Хулана илемлетес тĕлĕшпе ĕçсыннисем тăрăшса ĕçлеççĕ. Канаш республикăри чи илемлĕ хуласенчен пĕри пулать.

А. СМИРНОВ,
Канаш хула Совет исполкомĕн председателĕн заместителĕ.

Мичуринла сортлă чие çырли пулса çитнĕ

ХОБОТОВО (Тамбов облаçĕ), июлĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Улма-çырла ӳстерекен «Комсомолец» колхозра «Краса севера» текен мичуринла сортлă чие çырлине пухса кĕртме тытăннă. Вăл «Владимирская» сортлă чие çырлинчен виçĕ эрне малтан пулса çитнĕ.

Чие çырли сачĕ 27 гектар çĕр йышăннă. Лайăх пăхса ӳстернипе çак садри чие çырли йывăççисем тăватă çула çитсенех çимĕç пама пуçланă.

СОВЕТ ГОСУДАРСТВИНЕ ЫВĂНМА ПĔЛМЕСĔР ТĔРЕКЛЕТЕР

Партин XIX-мĕш съезчĕ коммунизм строительствинче паллă тапхăр йышăнса тăчĕ. Вăл пилĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕллĕшпе йышăннă директивăсенче социализмла хуçалăха малалла аталантарассишĕн, пирĕн çĕршыври ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн тата вĕсен культурăллă шайне ӳстерессишĕн, ССР Союзĕнче коммунизм тумалли хăватлă хĕçпăшал пулса тăракан Совет государствине тĕреклетессишĕн кĕрешес тĕллĕшпе парти умĕнче тăракан задачăсене кăтартса пачĕ. Совет государстви, мир политикине пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пырса тата пирĕн çĕршывăн оборона пултарулăхне тĕреклетсе, совет çыннисен пултарулăх ĕçне хӳтĕлесе тăрать.

1953 çулхи мартăн 9-мĕшĕнче Г. М. Маленков, Л. П. Берия тата В. М. Молотов юлташсем каланă сăмахсенче партин чи пысăк задачисене кăтартса панă. Партин чи пысăк задачисенчен пĕри вăл пирĕн социализмла аслă государствăна—мирпе халăхсен хăрушсăрлăхĕн тĕрекĕ пулса тăракан государствăна çирĕплетесси пулать.

I.

Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе пирĕн çĕршыври ĕççыннисем буржуалла государствăна аркатса тăкрĕç, Совет государстви—çĕнĕ типлă государство, рабочисемпе хресченсен тĕнчери пĕрремĕш социализмла государствине туса хучĕç. Буржуалла государство ĕççынни массисен чи усал тăшманĕ пулса тăрать пулсан, Совет государствине ĕççыннисем хăйсем тунă тата ăна ĕççыннисем чун-чĕререн хисеплесе, пулăшса тăраççĕ. Совет государствине пур майсемпе те тĕреклетсе пырса, Коммунистсен партийĕ пĕрмаях халăх сине, историллĕ аталанăвăн тĕп вăйĕ сине таянса тăрать.

Коммунистсен партийĕн политикине пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пырса, Совет государстви халăх массисене çĕршыва индустриализацилессишĕн, ялхуçалăхне коллективизацилессишĕн, культурăлла революци тăвассишĕн кĕрешме организацилерĕ, эксплуататорла классене пĕтерсе тăкрĕ, ССР Союзĕнче социализм туса çитерчĕ.

Совет влаçĕ рабочи класпа хресченсен никам аркатайми союзĕ çине таянса тăрать. Социализм строительстви вăхăтĕнче çак союз нихçанхинчен те ытларах тĕреклленчĕ, халăхсем хушшинчи туслăха çав тери çирĕп туса хучĕ. Пирĕн çĕршыври рабочисен, хресченсен тата интеллигенцин интересĕсемпе тĕллевĕсем тата задачисем пĕрлĕхлĕ. Социализм çĕнтернипе совет обществине малалла илсе пыракан аслă вăйсем—совет патриотизмĕ, халăхăн мораллĕ-политикăллă пĕрлĕхĕ, пирĕн çĕршыври халăхсен туслăхĕ пулса тăчĕç.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ—Совет государствин ертсе тата çул кăтартса пыракан вăйĕ. Социализмла строя вăйлатса аталантарассишĕн пыракан кĕрешӳре парти ĕççыннисен малта тăракан отрячĕ, ĕççыннисен мĕнпур организацийĕсен, государствăпа обществăлла мĕнпур организацисен ертсе пыракан чăмăрĕ пулать. Парти, государство органĕсемшĕн тӳрремĕн ĕçлемесĕрех, государствăна хуçалăх тата культура строительствин мĕнпур ыйтăвĕсем тăрăх пĕтĕмĕшле тĕп кăтартусем парать, ертсе пырас ĕçе халăха парăннă, уншăн чун-чĕререн тăрăшса ĕçлекен çынсене лартма сĕнет.

Совет государстви, капитализмла йĕритавралăхра пурăнакан государство «пĕтсе пымалли» çинчен калакан теорие—марксизма хирĕçле теорие—парти аркатса тăкрĕ. Çак сутăнчăкла «теорие» совет халăхĕн чи усал тăшманĕсем—троцкистсемпе бухаринецсем сарнă. Капитализмла йĕритавралăх условийĕсенче Совет государствине пур майсемпе те тĕреклетмеллине Сталин юлташ наука енчен кăтартса пачĕ. Парти çапла шутлать: Совет государстви коммунизм вăхăтĕнче те, унчухне те капитализмла йĕритавралăх пулсан, сыхланса юлать. Совет Çарне, разведкăна тата карательнăй органсене тĕреклетсе пырса, пирĕн халăх мирлĕ хуçалăхпа культура строительстви валли условисем хатĕрлерĕ. Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче Совет государстви пĕтĕм тĕнчене вăл историре халиччен пулнă государствăсенчен чи тĕреклĕрехчи, пурăнма чи юрăхлăраххи тата чи çирĕпреххи пулнине кăтартса пачĕ.

Социализмла государствăна малалла тĕреклетес тени вăл унăн функцийĕсене—хуçалăхла-организаторла тата культурăлла-воспитанилле ĕçсен функцийĕсене, социализмла харпăрлăха вăрăсемпе сăтăрçăсенчен хӳтĕлес функцие тата тулашрăн килсе тапăнассинчен хӳтĕленес функцие вăйлатса, лайăхлатса пымаллине пĕлтерет. Социализмла государствăн çак мĕнпур функцийĕсем пĕрлĕхлĕ аслă тĕллеве—коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешес тĕллеве пăхăнса тăраççĕ.

Коммунистсен партийĕ пирĕн государствăн экономикăлла хăватне пур майсемпе те тĕреклетет. Совет государстви хăйĕн хуçалăхла-организаторла ĕçĕсене коммунизмăн материальнăй-производственнăй никĕсне хатĕрлес тĕллевпе туса пырать. Çĕршывăн пĕтĕм халăх хуçалăхне ертсе пырса, Совет государстви хăйĕн хуçалăхла-организаторла ĕçĕсенче социализмăн экономикăлла объективла законĕсене, совет обществин материальнăй пурнăçĕн умма тухса тăнă задачисене тĕп вырăна хурать.

Социализмăн экономикăлла тĕп законĕ хушнисене, халăх хуçалăхне план (пропорци) йĕркипе аталантармалли закон хушнисене тĕпе шута илсе, Совет государстви обществăлла пĕтĕм производствăна, уйрăмах производстве хатĕрĕсем туса кăларассине ытларах аталантарать. Совет государстви пирĕн халăхăн мирлĕ ĕçне организацилесе, ертсе пырать, хуçалăхри майсене накоплени ытларах тума мобилизацилет, кашни предприятие государство дисциплинине çирĕп пурнăçласа пымалла тăвассишĕн, плана кăтартса панă ассортимент енĕпе пурнăçламалла тăвассишĕн, пысăк палăртлă продукци туса кăларассишĕн, унăн хăйне ларакан хакне йӳнетессишĕн, халăха кирлĕ таварсен хакĕсене пĕрмаях йӳнетессишĕн тата ĕççыннисен материальнăй пурнăçне лайăхлатассишĕн кĕрешет. Совет органĕсем наукăпа техникăн чи çĕнĕ çитĕнĕвĕсене халăх хуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсенче ĕçе кĕртсе пыраççĕ, ĕçе организацилессине лайăхлатаççĕ, экономи режимне çирĕп тытса пыраççĕ.

Советлă обществăпа государство стройĕ социализмла производствăна вăйлатассишĕн тата ăна лайăхлатассишĕн кĕрешес ĕçре ĕççыннисене хăйсен творчествăлла пуçарулăхĕпе активлăхне кăтартма условисем туса парать. Пирĕн çĕршывра рабочисемпе колхозниксем, инженерсемпе техниксем хушшинче изобретательсемпе рационализаторсен юхăмне анлăн сарма кирлĕ условисене пурне те туса панă. Государство органĕсем социализмла ăмăртăва сарассишĕн, юлса пыракансене пирĕн обществăн малта пыракан ĕçченĕсемпе танлаштарассишĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшаççĕ.

Халăх ырлăхĕшĕн тăрăшасси, унăн материальнăй тата культурăлла ыйтăвĕсене чи туллин тивĕçтерессишĕн тăрăшасси Коммунистсен партийĕпе Совет государствишĕн чи аслă закон пулса тăрать. Çак тĕллевпе Совет государстви халăха кирлĕ таварсен хакĕсене пĕрмаях йӳнетсе пырать; совет суту-илĕвне анлăн туса пырать, ĕççыннисене тĕрлĕ льготăсем парса пысăк пулăшу кӳрет, çак енĕпе ĕççыннисене пулăшу парасси вăйланнăçемĕн вăйланать.

Государство органĕсен культурăлла-воспитанилле ĕçĕ халăха коммунизмла воспитани парас, пирĕн çĕршывра культурăна вăйлăн аталантарас тĕллевпе пулса пырать. Государство массăсен ăнланулăхĕпе вăйлă, тенĕ Ленин. Çак сăмахсем халĕ çĕнĕ вăйпа янăраççĕ. Совет çыннисем мĕн чухлĕ ытларах пĕлеççĕ, вĕсен культури мĕн чухлĕ çӳлĕрех, эпир—коммунизм патне малалла çавăн чухлех хăвăртрах пыратпăр.

ССР Союзĕнче социализмла идеологи пуç пулса тăрать, унăн никĕсĕ марксизм-ленинизм пулать. Çапах та пирĕн çĕршывра буржуалла идеологи юлашкисем, çынсен ăс-тăнĕнче капитализм юлашкисем сыхланса юлнă-ха, вĕсене капитализмла йĕритавралăх вăйлатма хăтланать. Çынсен ăс-тăнĕнчи капитализм юлашкисене пĕтерес, массăсене коммунизмла воспитани парас ĕçре Совет государстви хăйĕн идейăлла воспитани памалли мĕнпур майĕсемпе усă курать. Коммунистсен партийĕн политикине пурнăçласа, Совет государстви ĕççыннисене совет патриочĕсем пулма, халăхсем хушшинче туслă çыхăнусем тытса пыма, ĕç çине тата обществăлла харпăрлăх çине коммунизмла пăхма воспитани парать, интернационализм шухăшĕ майлă тата мĕнпур çĕршывсенчи ĕççыннисемпе тăванла çыхăнусем тытса пурăнас шухăш майлă вĕрентсе воспитани парать. Совет çĕршывĕнче партипе Совет государстви ĕççыннисене политика тĕлĕшпе питĕ сыхă пулма, шалтипе тулашри тăшмана хирĕç кĕрешес ĕçре çирĕп те чăтăмлă пулма вĕрентеççĕ.

Совет государстви социализмла харпăрлăха вăрăсемпе сăтăрçăсенчен ывăнма пĕлмесĕр сыхлать. Пирĕн государствăна хăйĕн çак функцине пурнăçлас ĕçре пĕтĕм халăх пулăшать. Совет çыннисем обществăлла пуянлăха—ĕççыннисен материальнăй пурнăçĕпе культура шайне ӳстермелли никĕсе ӳстерсе çирĕплетессишĕн тимлĕн тăрăшаççĕ.

Пирĕн çĕршыв çине тулашран килсе тапăнассинчен хӳтĕленес функци пĕтĕмлех коммунизм строительствин задачисене пăхăнса тăрать. Мир политикине пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пырса, пирĕн государство СССР Хĕçпăшаллă Вăйĕсене пур майсемпе те тĕреклетет. Совет государствин çарпа экономика тĕлĕшĕнчи хăвачĕ совет халăхне мирлĕ ĕçлеме май туса паракан паха услови пулать. Парти ССР Союзĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсене тăшман кирек мĕнле килсе тапăннине те отпор пама хатĕр тытас политика тытса пырать.

Совет халăхĕ мире сыхласа тĕреклетессишĕн тăрать, çакă вăл мире коммунизм обществи тума кирлĕ. Мир политики тата мĕнпур çĕршывсемпе пĕр-пĕрин интересĕсене пăхăннă никĕс çинче туслă ĕçлес тата ĕçлĕ çыхăнусем тытса пырас политика совет государствин хăйĕн пĕтĕм пурнăç йĕркинчен тата социализмла идеологи пĕлтерĕшĕнчен тухса тăрать. Çак политика ытти çĕршывсенчи, пысăк тата пĕчĕк çĕршывсенчи халăхсен прависене хисеплени çинче, пĕтĕм тĕнчери йĕркесене хисеплени çинче никĕсленсе тăрать.

Икĕ система мирлĕ пурăнма пултараççĕ тесе ăнлантарса, Совет государстви хăйĕн тулашри политикинче çакна тĕп вырăна хурать: интересленекен çĕршывсем хушшинче мирлĕ майпа, калаçса татса пама май килмен пĕр тавлашуллă ыйту та çук. Совет Союзĕ хăйĕн мирлĕ политикине социализм лагерĕнчи мĕнпур çĕршывсемпе туслă ĕçлесе тытса пырать.

Мир, демократипе социализм лагерьне пур майсемпе те тĕреклетессине, пирĕн халăхпа аслă Китай халăхĕ тата халăх демократин мĕнпур çĕршывĕсенчи ĕççыннисем хушшинчи никам аркатайми туслăха çирĕплетессине Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви хăйсен чи таса тивĕçĕ тесе шутлаççĕ. Демократи лагерĕнчи ĕççыннисем хăйсен сыхăлăхне вăйлатса пыраççĕ, демократи лагерĕн пĕрлĕхне пĕтерме е хавшатма хăтланакан фашистла провокаторсене хирĕç пыракан кĕрешӳре ĕççыннисем хăйсен речĕсене тачăрах пĕтĕçтереççĕ.

Совет государствин шалтипе тулашри политикине пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пыни унăн вăй-хăвачĕпе пĕтĕм тĕнчери авторитетне малалла ӳстерме май парать.

II.

Совет государствине тĕреклетес тени вăл социализмла демократин аслă майĕсемпе туллин усă курмаллине пĕлтерет.

Совет демократийĕ вăл—чăн-чăн халăх влаçĕ, мĕншĕн тесен ССР Союзĕнче халăхпа власть пĕрлĕхĕ. Совет государствин вăйĕ, чи малтанах, вăл халăхăн çирĕп пĕрлĕхĕ çине таянса тăнинче, халăх ăна çирĕп шанса тăнинче пулать.

Советсем массăсем хăйсем туса хунă организацисем пулаççĕ. Вĕсем совет çыннисен вăйĕсене, пуçарулăхне тата творчествăлла пултарулăхне ӳстерсе пыраççĕ, халăха государствăна ертсе пырас ĕçе хутшăнтарассине питĕ çăмăллатаççĕ. Советсенче—унăн центрти тата вырăнсенчи йышлă организацийĕсенче — партире тăман миллионшар активистсем, хуласемпе ялсенчи ĕççыннисем ĕçлеççĕ.

Советлă государство аппарачĕ,—тенĕ И. В. Сталин,—Советсенчен тата партире тăманнисен пĕрлешĕвĕсемпе партилле пĕрлешӳсенчен тăрать, вĕсем, Советсене массăсемпе пĕрлештерсе, государство аппаратне миллионшар массăсемпе пĕрлештерсе тăраççĕ, государствăпа халăх хушшинчи уйрăмлăха утăм хыççăн утăм пĕтерсе пыраççĕ.

Совет государстви чăннипех халăх государстви пулнине пирĕн çĕршыври власть органĕсен составĕ лайăх кăтартса парать. 1950 çулхи мартăн 12-мĕшĕнче СССР Верховнăй Советне 1.316 депутат суйланă, вĕсенчен 418-шĕ—рабочисем, 269-шĕ—хресченсем, служащисемпе интеллигенци представителĕсем 629 çын. Совет влаçĕн центрти тата вырăнсенчи органĕсен суйлавне хатĕрленсе иртернĕ вăхăтра миллионшер ĕççыннисем округсемпе участоксенчи суйлав комиссийĕсен членĕсем, суйлав участокĕсенчи агитаторсем пулса ĕçлеççĕ. Пирĕн çĕршывра халăх массисем Советсен комиссийĕсемпе секцийĕсенче активлă ĕçлеççĕ.

Совет Союзĕнче çĕршер пин рабочисене, хресченсене, служащисене государствăн ответлă ĕçĕсене уйăрса лартнă. Вĕсем министерствăсенче, управленисенче, фабрикăсенче, чугун çулсенче, вĕренӳ заведенийĕсенче тата ытти çĕрте те ертсе пырас ĕçсене йышăнаççĕ. Парти партире тăман миллионшар активистсене, малта пыракан çынсене—промышленноçпа ялхуçалăх производствинчи новаторсене воспитани пачĕ.

Парти халăх пуçарулăхне пур майсемпе те вăйлатас политика тытса пырать. Совет органĕсен ĕçĕсенчи çитменлĕхсене тата пирĕн общество пурнăçĕнчи пăсăк ĕçсене хирĕç кĕрешме халăхăн анлă массисене хутшăнтарма Совет государстви питĕ лайăх майсем туса парать. Халăх массисен критики совет çыннисен творчествăлла вăйĕсене ытларах палăртма, вĕсем хăйсем çĕршыв хуçи пулнин туйăмне çирĕплетме май парать.

Тӳрĕ кăмăллă мĕнпур çынсем рабочисен, служащисен, колхозниксен пухăвĕсенче, пленумсенче, конференцисенче тата ытти çĕрте те Советсен, государство учрежденийĕсен ĕçĕсенчи çитменлĕхсене хăюллăн та ним шикленмесĕр критиклеме пултараççĕ. Халăх массисен критики Совет государствине миллионшар ĕççыннисен опытне вăхăтра пĕтĕçтерме, совет çыннисен промышленноçри, ялхуçалăхĕнчи, культурăри тата наукăри çĕнĕ ĕçĕсене вăхăтра асăрхаса илсе сарса пыма май парать. Коммунистсен партийĕпе Совет государстви хăйсен планĕсене халăхăн коллективлă опытне шута илнĕ никĕс çинче тăваççĕ тата вĕсене лайăхлатса пыраççĕ, парти, совет, хуçалăх, профсоюз организацийĕсемпе ытти организацисен ĕçĕсене лайăхлатаççĕ.

Социализмла демократи пур нацисене те пĕр-пĕрне шанса тăма тата халăхсен туслăхне çирĕплетме май парать. Пирĕн çĕршыври пур халăхсем те, аслă вырăс халăхĕпе пĕрле пĕрлĕхлĕ те çирĕп çемьене пĕрлешнĕскерсем, советлă социализмла демократие вăйлатассишĕн тăрăшаççĕ. Совет Союзĕнче нациллĕ пусмăрлăха, расăлла тата нацилле дискриминацие яланлăхах пĕтерсе тăкнă. Нумай нациллĕ Совет государстви—мĕнпур нацисемпе расăсен пĕртанлăхĕн чи лайăх тĕслĕхĕ. СССР Конституцийĕн 123-мĕш статьинче çапла каланă: «ССР Союзĕн гражданĕсен пĕртанлăх прави, вĕсен национальноçĕпе расине пăхмасăр, пĕтĕм хуçалăх, государство, культура тата обществăпа политика пурнăçĕнче никам пăсайми закон пулса тăрать».

ССР Союзĕнчи халăхсен туслăхĕ Совет государствин питĕ пысăк çĕнтерĕвĕ пулать. Çак туслăх пур чухне пирĕн çĕршыври халăхсем ирĕклĕ пулаççĕ тата вĕсене никам та çĕнтерейместь, пирĕншĕн нимĕнле тăшмансем те, шалтисем те, тулашрисем те хăрушă мар. Çавăнпа та парти халăхсен туслăхне—нумай нациллĕ Совет государствин вăй-хăвачĕн хăватлă çăлкуçне куç шăрçине сыхланă пек усрать тата малалла тĕреклетет.

III.

Пирĕн государствăна тĕреклетес ĕçре парти государство аппаратне лайăхлатассишĕн тăрăшни пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Советлă государство аппарачĕ халăхшăн чун-чĕререн тăрăшать, коммунизм тăвассишĕн кĕрешет. Совет халăхĕ государство аппаратĕнчи работниксем умне ĕçлĕ тата мораллĕ-политикăллă пахалăхсем енĕпе пысăк требованисем лартать. Вĕсем халăх интересĕсемшĕн тăрăшма, коммунистсен партийĕпе Совет правительствин политикине пурнăçласа пыма тивĕç.

Парти государство ĕçĕнчи опытлă работниксен кадрĕсене воспитани парса çитĕнтерчĕ, вĕсен çĕршыва ертсе пыма опыт, пĕлӳсем, ăсталăх та çителĕклĕ таранах. XIX-мĕш съезд партин мĕнпур членĕсене тĕрĕс те тӳрĕ пулма, партипе государство умĕнчи тивĕçе пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пыма хушрĕ.

Совет государствин хăватлă вăйĕ çакă пулать: вăл хăшпĕр работниксене, вĕсем кирек мĕнле ĕçре пулсан та, вĕсем социализмла законлăха пăсма тата пирĕн çĕршыв гражданĕсен никам тĕкĕнейми прависемпе интересĕсене тĕкĕнме тытăнсан, хăюллăн та татăклăн тăрă шыв çине кăларать.

Совет государстви социализмла законлăха чыслăн пăхăнса пырать, совет стройĕн никам тĕкĕнейми никĕсĕ пулса тăракан обществăлла харпăрлăха сыхлать, совет гражданĕсен прависене, СССР Конституцийĕнче законласа çырса хунăскерсене, хӳтĕлет.

Государство органĕсен ĕçне малалла лайăхлатас тесен, буржуалла общество юлашкисене: волокитăна, ĕççыннисен çырăвĕсемпе ыйтăвĕсем çине бюрократла пăхнине тата ыттисене те татăклăнах пĕтерес пулать. Парти çав мĕнпур çитменлĕхсене хирĕç кĕрешет, государство органĕсене государство заданийĕсене пурнăçлассишĕн активлă кĕрешме хушать.

Аппарат ĕçне малалла лайăхлатас тĕлĕшпе ĕççыннисене Совет государствин мĕнпур ĕçĕсене хутшăнтарни, законсене, правительство постановленийĕсене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслеме хутшăнтарни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çĕршер те миллионшар рабочисем, вуншар руководитель кăна мар, пирĕн строительство мĕнле пынине тимлĕн асăрхаса тăччăр, вĕсем пирĕн йăнăшсене палăртчăр, тесе кăтартса панă И. В. Сталин. Массăсемпе тачă çыхăнса ĕçленĕ чухне кăна государство аппаратĕнчи работниксем халăхран вĕренме, унăн опытне пĕтĕçтерме, массăсен опычĕпе государствăна ертсе пырассине лайăхлатас ĕçре усă курма пултараççĕ.

Советлă государство аппаратне лайăхлатас, халăх хуçалăхне ертсе пырас ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе партипе правительство юлашки вăхăтра организациллĕ пысăк мероприятисем чылай туса иртерчĕç. СССР Верховнăй Совечĕн тăваттăмĕш сессийĕ СССР Министерствисене çĕнĕлле йĕркелесси çинчен, министерствăсен шутне чылай сахаллатасси çинчен, халăх хуçалăхĕпе культурăн пĕр пекрех отраслĕсене ертсе пырассине пĕрлештересси çинчен закон йышăнчĕ. Çакă вăл хуçалăхпа культура строительствин нумай ыйтăвĕсене оперативлăн татса пама май парать, халăх хуçалăхне планламалли йĕркесене лайăхлатать, государство заданийĕсене мĕнле пурнăçланине тĕплĕнрех тĕрĕслеме пулăшать.

* * *

Партипе правительство политикине вĕçĕ-хĕррисĕр шанса тăрса, совет халăхĕ хăйĕн творчествăлла ĕçĕсемпе тата хăйĕн социализмла ăнланулăхне ӳстерсе пынипе Совет государствине тĕреклетет. Пирĕн социализмла Тăван çĕршыв малалла тĕреклленсе аталанни халăхăн материальнăй пурнăçĕпе культурине лайăхлатас ĕçре çĕнĕрен те çĕнĕ çитĕнӳсем тума май парать,—совет çыннисем ун çинчен лайăх пĕлеççĕ. Çавăнпа та вĕсем партипе государство политикине—çĕршывра коммунизм тума май паракан политикăна—пурнăçлассишĕн çине тăрса кĕрешеççĕ.

Совет государстви, пирĕн обществăн мораллĕ-политикăллă пĕрлĕхĕ çинче никĕсленсе тăрса, тулли вăй-хăватпа малалла, хамăр çĕршыври коммунизм çĕнтерĕвĕ патне пырать.

Ю. БОРИСОВ,
Истори наукисен кандидачĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕнче

Çак кунсенче Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн ларăвĕ пулчĕ. Ларăва З. А. Андреева юлташ ертсе пычĕ.

Президиум çак ыйтусене сӳтсе яврĕ: Кувакино районĕнчи вырăнти Советсем сессисене мĕнле пухса иртерни тата вĕсен яланхи комиссийĕсем мĕнле ĕçлени çинчен; Шăмăршă районĕнче ĕççыннисен жалобисемпе заявленийĕсене пăхса тухас ĕç мĕнле тăни тата çак ĕçе лайăхлатмалли майсем çинчен; Красноармейски районĕнчи вырăнти Советсен исполкомĕсем нумай ачаллă амăшĕсене «Ача амăшĕн мухтавĕ» орденĕпе тата «Ача амăшĕн медалĕпе» наградăлас тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен.

Пĕрремĕш ыйтупа Кувакино район Совечĕн исполком председателĕн заместителĕ И. П. Баринов юлташ доклад туса пачĕ. Унăн доклачĕ тăрăх Президиум çакна палăртрĕ: ĕççынни депутачĕсен Кувакино район Совечĕн исполкомĕ ял Совечĕсен сессийĕсене вăхăтра пухас тата лайăх иртерес ĕçе йĕркелеме кирлĕ пек тăрăшмасть. Нумай ял Совечĕсем сессисене Чăваш АССР Конституцийĕн 57-мĕш статьинче кăтартнă срокра иртермеççĕ. Кувакино, Иваново, Сыресь, Кладбище ял Совечĕсем кăçал пĕтĕмпе те икĕ-виçĕ сесси кăна иртернĕ, Чăваш АССР Конституцийĕ тăрăх вĕсен 5—6-шар сесси иртермелле пулнă.

Хăшпĕр ял Совечĕсенче сессисене иртерме начар хатĕрленеççĕ, вĕсене хăçан пухасси тата мĕнле ыйтусем сӳтсе явасси çинчен депутатсене малтанах пĕлтермеççĕ; ыйтусене хатĕрлеме депутатсене тата яланхи комиссисене хутшăнтармаççĕ. Ыйтусене сӳтсе явма депутатсене активлă хутшăнтармаççĕ. Сăмахран, Кувакино ял Совечĕн пĕрремĕш сессийĕнче тата Миренка ял Совечĕн иккĕмĕш сессийĕнче пĕрер депутат тухса каланипех кун йĕркинчи ыйтусем тăрăх решенисем йышăннă. Рындино ял Совечĕн иккĕмĕш сессийĕнче пур ачасене те çичĕ çул вĕрентмелли закон мĕнле пурнăçланса пыни çинчен пăхса тухнă. Çак ыйту тăрăх пĕр депутат тухса каланă. Сесси вара ку ыйту тăрăх пĕр пунктлă решени йышăннă. Çак ял Совечĕн сессийĕсенче ыйтусене пачах сӳтсе явмасăр решени йышăнни час-часах пулать. Ичикса ял Совечĕн виçĕ сессийĕнче те виçĕ çын—ял Совет председателĕ, председатель заместителĕ, колхоз председателĕ кăна тухса каланă. Березово-Майдан ял Совечĕн тăваттăмĕш сессийĕнче тăватă ыйту тăрăх пĕр решени йышăннă.

Уйрăм ял Совечĕсенче депутатсем пухăнман пирки сессисем пулмаççĕ. Çавăн пирки Кладбище ял Совечĕ апрельпе май уйăхĕсенче сессисем иртермен.

Райсовет исполкомĕ ял Совечĕсене ĕçлеме вĕрентмест. Хăшпĕр ял Совечĕсенче (Кувакино, Кладбище, Ичикса) исполком мĕнле ĕçсем тумаллине пĕлмеççĕ, исполком ларăвĕсене уйăхĕ уйăхĕпе иртермеççĕ, иртерсен те нумай ачаллă амăшĕсене государствăран пособи памалла тăвасси çинчен çеç сӳтсе яваççĕ. Ичикса ял Советĕнче ку ыйтăва та председательпе секретарь хăйсем тĕллĕнех татса пама пăхаççĕ, исполкомра пăхса тухма лартмаççĕ.

Кувакино район Совечĕн исполкомĕ яланхи комиссисен ĕçне лайăхлатма мерăсем йышăнман. комисси председателĕсене пухса, вĕсене яланхи комиссисен мĕнле ĕçлемелли çинчен ăнлантарса паман.

Райсоветăн ултă комиссийĕнчен иккĕшĕ пачах ĕçлемеççĕ. Ял Совечĕн яланхи комиссийĕсенчен чылайăшĕ нимĕн те тумасть. Ял Совет председателĕсем яланхи комиссисен функцийĕсене пĕлмеççĕ. Çавна пула ĕнтĕ Любимовка ял Советĕнче яланхи комиссисен планне исполком председателĕпе секретарĕ тăваççĕ. Кладбище ял Советĕнче благоустройство енĕпе ĕçлекен яланхи комиссин отчетне совет активĕн канашлăвĕнче итлеме, бюджетпа финанс комиссийĕсен отчетне гражданĕсен пухăвĕнче итлеме палăртнă. Çакă вăл комиссисен прависене пăсни пулать.

Президиум Кувакино райсовет исполкомĕн председательне С. А. Леонов юлташа Советсен сессийĕсене вăхăтра, Чăваш АССР Конституцийĕнче кăтартнă срокра, пухса иртермелле тума, райсоветпа ял Совечĕсен яланхи комиссийĕсен ĕçне лайăхлатма тивĕçлĕ мерăсем йышăнма хушрĕ. Райсовет исполкомĕн ял Совечĕсене сессисем пухса иртерме пулăшас пулать. Вырăнти Советсен сессийĕсенче пăхса тухмалли ыйтусене хатĕрлеме активпа яланхи комиссисене хутшăнтармалла. Сессисен кун йĕркинчи ыйтусем тăрăх яланхи комиссисем содокладсем туса паччăр. Райсовет исполкомĕн ял Советсене ертсе пырас ĕçе лайăхлатмалла, организацилле-массăлла ĕçе çӳлĕ пусăма хăпартмалла. Организацилле ĕçе лайăхлатнипе хуçалăхпа культура строительствинчи задачăсене ăнăçлă пурнăçласа пымалла.

Шăмăршă районĕнче жалобăсемпе заявленисене пăхса тухас ĕç мĕнле тăни çинчен райсовет исполкомĕн председателĕ А. Е. Васильев юлташ доклад туса пачĕ. Унăн докладне сӳтсе явнă хыççăн, Президиум çакна палăртрĕ: Шăмăршă районĕнче ĕççыннисен жалобисемпе заявленийĕсене пăхса тухас ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур. Райсовет исполкомĕпе унăн пайĕсенче заявленисемпе пыракансене хăш кун тата хăш сехетре йышăнмалли йĕрке туман. Çавăн пирки ĕççыннисен пĕр ыйтупах исполкомпа унăн пайĕсене темиçе хут çитме тивет. Ĕççыннисем сăмахпа каласа панă жалобăсемпе заявленисене шута илсе ĕçе йĕркелемен. Тĕрĕслеме янă жалобăсемпе заявленисем пирки мĕнле мерăсем йышăннине тишкерсе тăни çук. Заявленисемпе жалобăсене срокра пăхса тухмаççĕ. Хăшпĕр жалобăсене ячĕшĕн кăна пăхса тухаççĕ.

Президиум Шăмăршă райсовет исполкомĕн председательне А. Е. Васильев юлташа гражданĕсен жалобисемпе заявленийĕсене пăхса тухас ĕçре çирĕп йĕркелĕх тума, ку ĕçе ячĕшĕн çеç тăвакансене ответ тыттарма хушрĕ. Исполком ларăвĕсенче жалобăсемпе заявленисене пăхса тухас ĕç мĕнле пыни çинчен отчетсем итлемелле. Исполкомпа унăн пайĕсенче заявленипе пыракан çынсене хăш кун тата хăш сехетре йышăнмалли çирĕп йĕрке тумалла. Пур жалобăсемпе заявленисене те шута илсе, вĕсене пăхса тухас ĕç мĕнле пынине тĕрĕслесе тăмалла.

Красноармейски районĕнче нумай ачаллă амăшĕсем çинчен наградăлама материалсем тăратас ĕç мĕнле тăни çинчен итленĕ хыççăн, Президиум Красноармейски райсовет исполкомне çак ĕçе лайăхлатма тивĕçлĕ мерăсем йышăнма хушрĕ.

„Коммунизм ялавĕ“ хаçатра çырнă хыççăн

„Куçа курăнман клуб“

Майăн 6-мĕшĕнче «Коммунизм ялавĕ» хаçатра пичетленсе тухнă «Куçа курăнман клуб» ятлă фельетонра Канаш районĕнчи Уçырма ялĕнчи вулав çуртĕ кирлĕ пек ĕçлеменни çинчен çырнăччĕ.

КПСС Канаш райкомĕ фельетонра кăтартнă фактсем çинчен бюро ларăвĕнче сӳтсе явнă. Парти райкомĕн бюровĕ райисполкомăн культурăпа çутĕç пайĕн заведующийне Павлова юлташа çак клуб ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерме, колхоз правленине клуб валли çĕнĕ çурт туса лартма хушнă. Клуб çуртне туса пĕтерриччен Уçырмари клуба вулав çуртĕ шутламалла тесе йышăннă.

„Çамрăк рабочисене воспитани парасси çинчен“

«Коммунизм ялавĕ» хаçатра майăн 9-мĕшĕнче «Çамрăк рабочисене воспитани парасси çинчен» ятлă статья пичетленчĕ. Унта Çĕмĕрлери сĕтел-пукан тăвакан комбинатра çамрăк рабочисене вĕрентсе воспитани парас ĕçри çитменлĕхсем çинчен çырнăччĕ. Статьяра çавăн пекех комбинатра техника кабинечĕ çукки, каçхине вĕренекен çамрăк рабочисем валли занятисене çӳреме çителĕклĕ условисем туса паманни, лекцисем сахал иртерни çинчен те асăннăччĕ.

КПСС Çĕмĕрле райкомĕ статьяра асăннă фактсем тĕрĕс пулни çинчен пĕлтерчĕ. Комбинатри кадрсен пайĕн начальникне Тимофеев, ВЛКСМ комитечĕн секретарьне Грядинский тата профсоюз завкомĕн председательне Илларионов юлташсене статьяра кăтартнă çитменлĕхсене пĕтерме хушнă.

„Йывăç сутакан складра йĕркелĕх çук“

«Коммунизм ялавĕ» хаçатра «Йывăç сутакан складра йĕркелĕх çук» ятлă статья июнĕн 7-мĕшĕнче пичетленсе тухнăччĕ.

Союзлесторгăн республикăри базин директорĕ статьяри фактсем тĕрĕс пулни, Канашри вăрман сутакан склад тата çавăн пекех Вăрмарти йывăç сутакан склад ĕçĕсене тĕплĕ ревизи тума палăртни çинчен пĕлтерчĕ.

„Рвачсемпе вĕсене хӳтĕлекенсем“

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ «Коммунизм ялавĕ» хаçатра мартăн 1-мĕшĕнче пичетленнĕ «Рвачсемпе вĕсене хӳтĕлекенсем» ятлă заметкăри фактсем пĕтĕмĕшпе илсен тĕрĕс пулни çинчен пĕлтерчĕ.

Министрсен Совечĕ, хаçатра пичетленнĕ заметкăна сӳтсе явса, Чăвашзаготзерно системинче тӳрĕ кăмăлпа ĕçлемесĕр айăпа кĕнĕ уйрăм работниксене тивĕçлипе ответ тыттарма ĕçе республика прокуратурине пама йышăннă.

Тĕрĕслеме янă çырусем тăрăх

«Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕ Шăхасан районĕнчи Анаткас Кипечри письмоносец подписчиксене хаçатсем йĕркеллĕ леçсе паманни çинчен çырнă çырăва республикăри çыхăну управленине тĕрĕслеме янăччĕ.

Çыхăну управленийĕ автор тĕрĕс çырни, çырура асăннă çитменлĕхсене пĕтерме тивĕçлĕ мерăсем йышăнни, кирлĕ пек ĕçлемен письмоносеца ответ тыттарни çинчен пĕлтерчĕ.

* * *

«Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийне Шупашкарти мунчари çитменлĕхсем тата ирсĕрлĕхсем çинчен çыру килнĕччĕ. Редакци çырăва тĕрĕслеме Шупашкар хула Совечĕн коммунальнăй пайне янăччĕ.

Шупашкар хула Совечĕн коммунальнăй пайĕ мунчари çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнни, айăплисене ответ тыттарни çинчен пĕлтерчĕ.

„Заготзерно" пункчĕ хатĕр мар

Йĕпреçри хатĕрлев пункчĕ патĕнче государствăна çĕрулми сутнăшăн тырă илме килнĕ колхозниксен лавĕсем тăраççĕ. Вĕсем тулли лавпа ниçе çула тухса кайсан лашисене шăварасшăн пулчĕç. Урапа çумне çыхса хунă витрисене салтса илсе, пусă патне шыв ăсма пычĕç.

— Шыв ăсма çук куntан,— илтĕнчĕ маларах çитнĕ колхозник-сасси.

— Мĕнле çук... Пĕлтĕр те, виçĕмçул та государствăна тырă пама килсен çак пусăран шăвараттăмăр вĕт,— тĕрĕç ыттисем.

— Çапла та...— Йĕри-тавра пăхçаламасăр пусăрĕ маларах çитнĕ колхозник.— Шыв ăçтан ăсмалла? — ыйтрĕ вăл хатĕрлев пункчĕн хапхи умĕнче тăракан хуралçа курсан.

— Во-о-он лере!— аллине тăсса кăтартрĕ хуралçă.

Ку таранччен усă курнă пусă, чăнах та, пĕтĕмпех юрăхсăра тухнă. Пусă пури кишĕлсе пĕтнĕ. Çӳп-çап тулнă.

Колхозниксем витрисене çĕклесе хуралçă кăтартнă еннелле утрĕç.

— Капла пурте пĕр пусăран шыв ăсcан ирхи-куна кaç тăвăн,— тĕлĕнеççĕ колхозниксем.

— Лавпа кĕрсен епле каялла çаврăнса тухмалла кунтан?— теççĕ теприсем.

— Асăрхăр-ха, çул халех капла та, кĕркунне килмессерен тĕнĕл хуçмалла пулать.

Хатĕрлев пункчĕ патне пымалли çул та, пусă пекех, ниме юрăхсăр. Лавсем пĕр лакăмран тухсанах тепĕрне анса лараççĕ.

— Мĕншĕн тырă паракансене кĕтсе илме хатĕрленместĕр?— Хатĕрлев пункчĕн директорĕнчен А. Степашкин юлташран ыйтма пуçларĕç колхозниксем.

— Мĕнле хатĕрленместпĕр?— хатĕрлев пункчĕн кантурĕ еннелле тĕллесе кăтартрĕ Степашкин.

Степашкин юлташ кантур çуртне юсассиçинчен ытларах шухăшлать пулмалла. Çавăнпа вăл «Заготзерно» пункчĕ çĕнĕ тырра йышăнма мĕнле хатĕрленни çинчен интересленекенсене кантура илсе кайса кăтартать. Мĕншĕн тесен... урăх нимĕнпе те мухтанмалли çук.

Иртнĕ çулсенче хатĕрлев пунктĕнче çĕнĕрен пысăк складсем туса лартнă. Çавă тухсан нумай складсем пушанса юлнă. Ку ĕнтĕ вĕсене юсаса çĕнĕ тырра йышăнма хатĕрлес ĕçе нумай çăмăллатнă. Апла пулсан та, хатĕрлев пунктĕнчи складсене юсассине питĕ вăраха тăсаççĕ. Икĕ пысăк склада тин кăна юсама тытăннă-ха. Юсанисен шутне кĕрекен складсене те шăтăк-шăхăрсене питĕрсе пĕтереймен. Акă сушилка çумĕнчи склада илер. Чĕрĕрех тырра пĕтĕмпех малтан çак склада хумалла та, сушилкăра типĕтсе нумай вăхăт сыхланса усрама хатĕрлемелле. Ку складăн урайне пăсса асфальт сарнă пулсан та, тăррине йĕркеллĕ питĕреймен. Ăçта пăхнă унта шăтăк курăнать. Хăшпĕр складсен урайĕнчен тăпрари шыв сăрхăнса кĕнĕ пирки иртнĕ çулта та, кăçал та пайтах тырă пăсăлнă. Вĕсен урайне юсаса шыв кĕмелле мар тума тин тытăннă-ха. Хăçан юсаса пĕтерессиçинчен никам та татăклăн пĕлмест. Мĕншĕн тесен складсене юсассине план тăрăх туса пымаççĕ.

— Пирĕн малтанлăха тырă илме пушă складсем пур. Вĕсем тулнă çĕрс кусене юсатпăр,— юсаса пĕтермен складсем еннелле кăтартса калать Степашкин юлташ.

Государствăна тырă пама пуçласан кунта тем чухлĕ тараса кирлĕ пулать. Колхозниксене кĕттерсе тăрас мар тесен, тарасасене юсаса пĕтерсе складсене лартмалла пулнă ĕнтĕ. Анчах тарасасене юсама тытăнмапа пĕрех. Вĕсем ăçта килчĕ унта сапаланса лараççĕ. Хĕвел-е çумăр айĕнче тутăхса ларса пăсăлаççĕ. Хăшпĕр тарасасен тимĕртен тунă пайĕсем лайăх пулсан та, йывăç пайĕсем çĕрсе, хуçăлса пĕтнĕ. Степашкин юлташ кун пек тарасасĕне «вĕсене пĕлтĕр те юсаттарман» тесе, кăçал та тӳрлеттересшĕн мар. Çапла вара хаклă тăракан тарасасем юхăнса юрăхсăра тухаççĕ.

Кунта тырă типĕтмелли сушилкăсемпе тырă тасатмалли машинăсене те питĕ япăх пăхса усраççĕ. Вĕсенчен нумайăшне юсаман.

Тырă пахалăхне тĕрĕслекен лабораторие те хатĕрлесе çитереймен-ха. Сăмахран, тырă нӳрĕлĕхне тĕрĕслемелли сичĕ хатĕртен пĕрне кăна юсанă. Ыттисене юсама Шупашкара леçсе панă. Унтан хăçан илсе килесси паллă мар.

Колхозсем государствăна таса, тутă тата типĕ тырă пама тăрăшаççĕ. Анчах, çул çинчи тĕрлĕрен сăлтавсене пула, тырă нӳрленме е çӳп-çапланма пултарать. Хатĕрлев пункчĕн колхозсене кун пек тырра тасатма условисем туса памалла. Пĕлтĕр кунта колхозсенчен илсе килнĕ тырра тасатма ятарласа вырăн хатĕрленĕ пулнă. Кăçал вăл вырăн ниме юрăхсăра тухнă. Лупас тăрринче тем чухлĕ шăтăк-шăхăр: кăшт çумăр çусанах шыв шапăртатса анать. Лупас айĕнче чĕркуççи таран курăк ӳсет. Унти çереме касса тикĕслемен. Колхозсенчен илсе килнĕ тырра тасатмалли машинăсене пĕрне те юсаман. Çапла вара çул çинче çумăр айне пулса нӳрленнĕ тырра ирĕксĕрех каялла колхоза илсе кайса типĕтме тивет.

Хатĕрлев пунктĕнчи работниксене государство питĕ нумай тата хаклă пурлăха сыхласа усрама шанать, вĕсем чи шанчăклă çынсем пулмалла. Ку ĕнтĕ хатĕрлев пункчĕн директорне кадрсене питĕ пĕлсе, суйласа илме хушать. Анчах кунта ĕçлекен хăшпĕр çынсене ниепле те шанăçлă теме çук. Сăмахран, директор заместительне А. Лысова иртнĕ çулсенче питĕ нумай тырă пăсса сая янăшăн судпа айăпланă. Вăл халĕ те çав вырăнтах ĕçлет. Çăнăх, кĕрпе тата ытти хатĕр продуктсем усракан склад заведующийĕ А. Крылов ĕçĕнче йĕркесĕрлĕхсем нумай. Вăрлăхлăх тырра хурса тăракан склад заведующийĕ Хабаров хăйĕн ĕçне ытла та çиелтен тăвать. Степашкин юлташ шанчăклă мар çынсенчен тасалас вырăнне, вĕсемпе пĕр çемьери пек пурăнать. Çавна пула ыттисем вĕсен çитменлĕхĕсене кăтартса панине шута илмест.

П. ЩИПЦОВ.

Çамрăк сăнавçăсем

СĔМĔРЛЕ. Вăрманкасри шкул участокĕ пĕр гектар йышăнать. Унта шкул ачисем сăнавлă ĕçсем туса ирттереççĕ. Аслă пионервожатăй Алмакаев ертсе пынипе çамрăк натуралистсен кĕтесне йĕркеленĕ. Унта ĕç планĕ, дневник, сăнавсен журналĕ пур. Комсомолецсем уйăхра иккĕ «Çамрăк мичуринец» стена хаçачĕ кăлараççĕ.

Шкул участокĕнче 5 çул хушши нумай пучахлă тулă, хупăсăр вăраллă сĕлĕ, дыня акса тата лартса сăнаса пăхаççĕ. Кăçал арбуз акрĕç, вĕсем лайăх ӳсеççĕ.

А. АФАНАСЬЕВ.

Артистсем рабочисемпе тĕл пулчĕç

Çак кунсенче Кизел хулинчи драма театрĕн коллективĕ Шупашкарти пирĕр комбинатĕнче ĕçлекенсемпе тĕл пулчĕ. Артистсем рабочисене Е. Успенский тата Л. Ошанин çырнă «Твое личное дело», Оливер Гольдсмитăн «Ночь ошибок» спектакльсен пайĕсене лартса пачĕç, мир ячĕпе çырнă сăвăсене вуларĕç.

Концерта РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ А. Бронина, çавăн пекех Т. Парамонова, Е. Парская, Н. Яковлева, Н. Петровский, В. Красногор тата Б. Прасолов артистсем хутшăнчĕç. Рабочисем концерт лартса панăшăн артистсене тав турĕç.

В. СКАЛЬДИН.

Лайăх çул-йĕршĕн!

ХИСЕП ХĂМИ

Ĕçсынни депутачĕсен райсовет исполкомĕсемпе КПСС райкомĕсем, Çул-йĕр тата транспорт хуçалăх управленийĕ тăратнă тăрăх, çул-йĕр строительстви планне срокчен тултарнăшăн республикăри Хисеп хăми çине çак колхозсене кĕртнĕ:

СОВЕТСКИ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

2. **Чкалов ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **Н. Кириллов** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **А. Сидоров** юлташ, çул-йĕр бригадин бригадирĕ **Н. Тимофеев** юлташ). Колхоз çĕр чавса купаламалли, чул хатĕрлесе турттармалли плана 100 процент, хăйăр турттармалли плана 106 процент тултарнă.

3. **«Красное Сормово» колхоз** (председателĕ **Н. Александров** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **Д. Иванов** юлташ, çул-йĕр бригадин бригадирĕ **Д. Иванов** юлташ). Колхоз чул хатĕрлемелли тата турттармалли плана 100 процент, хăйăр турттармалли плана 104 процент, çĕр чавса купаламалли плана 260 процент тултарнă.

4. **Куйбышев ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **В. Шумилов** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **А. Краснов** юлташ, çул-йĕр бригадин бригадирĕ **В. Иванов** юлташ). Колхоз чулпа хăйăр турттармалли плана 100 процент, çĕр чавса купаламалли плана 120 процент тултарнă.

ÇУЛ-ЙĔР СТРОИТЕЛЬСТВИ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(Июлĕн 5-мĕшĕ тĕлне, процентпа)

Районсем, çул участокĕсем	Материалсем турттарнă	Чул сарнă	Кĕпер тунă	Çĕр купаланă
1. Сĕнтĕрвăрри	136	135	110	115
2. Шупашкар	133	112	107	103
3. Тăвай	124	83	124	117
4. Шăхасан	110	190	78	179
5. Муркаш	18	101	60	107
6. Улатăр	97	70	65	136
7. Чкаловски	94	120	63	98
8. Пăрачкав	94	30	87	100
9. Куславкка	92	77	71	79
10. Ишлей	90	68	55	102
11. Елчĕк	90	60	78	191
12. Советски	90	82	11	72
13. Элĕк	84	92	45	96
14. Вăрмар	80	63	106	73
15. Чурачăк	80	55	10	119
16. Октябрьски	80	60	50	31
17. Калинино	80	40	9	103
18. Канаш	75	24	91	67
19. Комсомольски	73	100	60	100
20. Çĕрпӳ	64	68	57	147
21. Сĕнтĕр	56	52	63	58
22. Етĕрне	56	35	71	61
23. Первомайски	100	—	37	73
24. Вăрнар	50	3	65	102
25. Шăмăршă	50	18	27	57
26. Хĕрлĕ Чутай	43	58	60	95
27. Çĕмĕрле	43	18	59	31
28. Кувакино	42	30	32	40
29. Йĕпреç	36	20	53	43
30. Красноармейски	50	15	2	39
243 çул участокĕ	81	52	29	100
242 çул участокĕ	70	88	41	—
241 çул участокĕ	61	30	73	44
240 çул участокĕ	42	6	77	85
50-мĕш МДС	40	41	3	28

Ответлăха туйса илмелле

СĔНТĔР. Уйрăм колхозсен руководителĕсем çул-йĕр строительствине кирлĕ пек хакламаççĕ. «Знамя», «Прожектор», Свердлов ячĕпе тăракан колхозсенчен çул çинче ĕçлекенсем çукпа пĕрех. Асăннă колхозсен председателĕсем В. Мазуров, А. Пегасов, С. Григорьев юлташсем çул-йĕр строительствинче хăйсем çинчен ответлăха сирсе яма пăхаççĕ.

Çул-йĕр пайĕн заведующийĕ М. Никольский юлташ колхозсене план панипе лăпланса ларать.

— Мана пулăшакан çук,— тет вăл ĕçсем япăх пыни çинчен сăмах хускатсан. Райсовет исполкомĕн государство планне вăхăтра тултарма тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла, район çул строительстви енĕпе юса пынине пĕтермелле.

П. СКВОРЦОВ.

Ăмăртса ĕçленипе

СОВЕТСКИ. «ГАЗ-51» автомашина колхоз правленийĕ умне пырса чарăнчĕ. Кабинăран Л. Иванов шофер тухрĕ.

— Плана тултартăмăр,— терĕ вăл, председатель умне пырса.— 150 кубометр хăйăр турттартăмăр.

Колхоз председателĕ Н. Александров юлташ хăйăр турттарнă çĕрте лайăх ĕçлекенсене тав турĕ. Вăл шоферпа пĕрлех Р. Спиридонова, А. Афанасьева, М. Николаева çамрăксен ячĕсене асăнчĕ. Вĕсем задание тăтăшах ирттерсе тултарнă.

Нумай та вăхăт иртмерĕ, чул хатĕрлесе турттаракансем те плана ирттерсе тултарни çинчен пĕлтерчĕç. Халĕ планран ирттерсе чул турттараççĕ. Унпа кĕпер тунă çĕрте усă кураççĕ.

Колхоз правленийĕпе çул-йĕр бригадин бригадирĕ Д. Иванов юлташ июнь уйăхĕнче çул çинче тунă ĕçсен итогĕсене палăртаççĕ.

— Пĕр пин те çĕр кубометр çĕр чавса купаланă,— пĕлтерет бригадир.

— Пирĕн план 420 кубометр. Апла çулталăкри плана 260 процент пурнăçланă. Бригада пĕр километр çурă тăршшĕ çул çинчи тăпрана хăпартнă, икĕ хĕррине канав чавнă.

— Малтан ку çул çинче çӳреме кансĕрччĕ, кашни утăмра тенĕ пекех шăтăк-путăкчĕ. Халĕ çатма пек тикĕс çул тăрăх автомашина çил пек вĕçет,— калаçăва хутшăнать колхоз шоферĕ.

Çĕр чавнă çĕрте ĕçе уйрăм сдельщина йĕркипе тунă. Кашниех хăйне панă участокра лайăххрах ĕçлеме, нормăна ирттерсе тултарма тăрăшнă. Çамрăксем кану вăхăтне савăнăçлă ирттернĕ. Колхозри парторганизаци секретарĕ Д. Иванов юлташ вĕсем патне çĕнĕ хаçат-журналсем илсе тухнă. Кашни кунхи ăмăрту итогĕсене кăтарту хăми çине çырнă.

Çапла ĕçлерĕç çул çинче «Красное Сормово» колхоз членĕсем.

Кунта кăçалччен çул-йĕр бригади пулман. Кăçал ятарласа бригада тунă. Бригадăри колхозниксене уйрăм ĕçсем çумне çирĕплетсе тухнă. Социализмла ăмăртăва вăйлăн сарса пынине пула колхоз июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне кăçалхи плана пур ĕçсем енĕпе те тултарчĕ.

Ĕçре уйрăмах паха тĕслĕхсем кăтартнăшăн «Красное Сормово» колхоза районти Хисеп хăми çине кĕртнĕ.

КПСС райкомĕпе райсовет исполкомĕ çавăн пекех Чкалов ячĕпе, Куйбышев ячĕпе тăракан колхозсене те Хисеп хăми çине çырнă.

Я. СИГАЕВ.

Редакцие килнĕ çыру

Санитари йĕркисене пурнăçласа пымалла

Пирĕн республикăри хуласенче— Шупашкарта, Канашра, Улатăрта, Çĕмĕрлере тата ытти хуласемпе район центрĕсенче обществăлла çурт-йĕр тăвасси, ĕçсыннисем хăйсен вăйĕпе çуртсем лартасси çулран-çул анлăн сарăлса пырать. Хуласене рабочи поселокĕсенче водопроводсемпе канализаци тăвас ĕç вăйланчĕ.

Хуласенчи предприятисемпе обществăлла çуртсене тума палăртнă чухне санитари йĕркисене çирĕп тытса пыни халăх сывлăхне сыхлама кирлĕ тĕп майсенчен пĕри пулать. Ку тĕлĕшпе промышленность предприятийĕсене тĕрĕс вырнаçтарни уйрăмах пысăк вырăн йышăнать. Халăх пурăнакан вырăнсенче промышленность каяшĕсем, сĕрĕм-тĕтĕм тата предприятисен шавĕ пулмалла мар. Анчах Шупашкарти промышленность предприятийĕсем валли участоксем уйăрса панă чухне санитари нормисене пурнăçламаççĕ. Строительство организацийĕсем çурт-йĕр тăвас пирки государствăн санитари инспекцийĕпе калаçса таталмаççĕ. Горпромкомбинатăн çăматă йăвалакан фабрики валли участок уйăрса панă чухне те санитари нормисене шута илмен.

Хăшпĕр чухне промышленность предприятийĕсен уйрăмлăхĕсене, вĕсем мĕнле продукци туса кăларассине шута илмесçĕ. Шупашкар хулин главнăй архитекторĕн Мамаев юлташăн промышленность предприятийĕсем валли участок уйăрса парас пирки санитари инспекцийĕпе канашламалла, правительство санитари енĕпе кăтартса панисене тĕрĕс пурнăçлама тăрăшмалла.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Архитектура управленийĕ те строительство ĕçĕнче санитари йĕркисене пăсать, çурт-йĕре пĕр-пĕринчен çывăхра тăвать. Паллах ĕнтĕ, çапла туни санитари нормисене пăсни пулать.

Санитари нормисем тăрăх, кашни çурт хушшинче çурт çулĕшĕ чухлĕ, тăвата хутлă çуртсем хушшине 15 метртан кая мар хушă хăвармалла. Талкăшпех çуртсем туса лартнă кварталсене автомашинăсем кăларакан тĕтĕмсенчен уçăлтарма хĕн, вĕсем вара халăх сывлăхне сиенлĕ пулса тăраççĕ.

Ĕçсыннисене хăйсен вăйĕпе туса лартакан çуртсем валли участоксем уйăрса панă чухне те кварталпа квартал хушшине çителĕклĕ пушă вырăн хăварма кирлине час-часах манаççĕ, автомашинăсемпе çӳреме вырăн хăвармаççĕ. Çакă вăл санитари нормине тӳрремĕнех пăсни пулать.

Хулара урамсене йывăç лартса илемлетес ĕçе çителĕксĕр йĕркеленĕ. Çакă вăл ĕçсыннисен кану вăхăтне усăллă та культурăллă ирттерме чăрмав кӳрет. Паллах ĕнтĕ, республика центрĕнчи ачасен ыйтăвĕсене хулари ачасен паркĕ пĕтĕмĕшпе тивĕçтерме пултараймасть. Парка хула тулашĕнче пурăнакан рабочисен ачисем килеймеççĕ. Суртсем çывăхĕнче садсем çук пирки ачасене уçăлса çӳреме вырăн çук. Çакна Архитектура управленийĕн хула строительствине планланă чухне малашне шута илес пулать.

Шупашкар, Улатăр, Канаш, Çĕмĕрле хулисенче водопроводпа канализаци хуçалăхĕ ӳсрĕ. Анчах реагентнăй материалсем çителĕклĕ мар. Халăха шыв парса тăрас ĕçре чăрмавсем пулаççĕ. Шыв таса мар. Водосвет директорне Благодатских юлташа шыв тасатса тăмалли хлораторнăй аппарат майлаштарса лартма тата реагентнăй хуçалăха йĕркеллĕ тытса пыма темиçе хут та асăрхаттарнă. Анчах Благодатских юлташ паянхи куна çитсе те ку тĕлĕшпе нимĕн те тумасть.

Пирĕн республикăри хуласемпе рабочи поселокĕсене шыв парса тăмалли çăлсемпе пусăсем нумай. Анчах вĕсене нумайăшне санитари енчен йĕркелесе çитермен. Кун пирки правительство вырăнти Совет исполкомĕсене ятарласа кăтарту панă. Çапах та çак кăтартăва нумай исполкомсем пурнăçа кĕртмен-ха.

Шупашкар хула Совет исполкомĕ çăлсене 3-мĕш кварталта кăна юсама палăртнă. Правительство кăтартнă тăрăх, çăлсене çуркуннех юсаса çитермелле пулнă. Çăлсене юсавлă тытманни çуллахи вăхăтра вар-хырăм чирĕсемпе кĕрешес ĕçре сиен кӳме пултарать.

Халăх пурăнакан вырăнсене яланах таса тытни çынсен сывлăхне сыхлас ĕçре питĕ кирлĕ. Хулари çӳп-çапсене, тĕрлĕрен ăпăр-тапăрсене, тислĕке вăхăтра тасатса тăмалла. Мĕншĕн тесен çав тасамарлăхсенче чир-чĕр саракан шăнасем ĕрчеççĕ. Çурт-йĕр таврашĕнчи çӳп-çап йĕкехӳресене, шăшисене ĕрчеме май парать. Вĕсем урлă тĕрлĕрен чир-чĕрсем сарăлаççĕ. Çурт коменданчĕсен, çурт управленийĕсен, урам комитечĕсен председателĕсен халăх пурăнакан вырăнсене таса тытасси çинчен пĕр минутлăха та манмалла мар. Пурăнмалли çурт-йĕр таврашĕнче тасалăхшăн, тирпейлĕхшĕн кĕрешес ĕçре йĕркелĕх туса хуни кирлĕ.

Шупашкарти коммунальнăй хуçалăх çӳп-çап турттармалли обозсем йĕркелемен. Çӳп-çап, тислĕк тăкмалли вырăнсемпе пĕлсе усă курмаççĕ. Çак ĕçе санитарипе эпидеми станцийĕ те тĕрĕслесе тăмасть.

Халăх пурăнакан вырăнсенче шĕвек тасамарлăхсене тасатмалли майсенчен пĕри канализаци пулса тăрать. Анчах та пирĕн республикăри канализаци халăх пурнăçне туллин тивĕçтерсе параймасть-ха. Час-часах пĕр-пĕр техникăлла кăлтăксем пирки канализаци ĕçлемест.

Юхса тухман шывсене, пĕвесене тасатасси çителĕксĕр пулса пырать, вĕсене тасатма хлорлă известь çителĕклĕ таран хатĕрлемен.

Правительство кăтартнă тăрăх, Канашпа Çĕмĕрлере канализаци тата çӳп-çап, тислĕк, тĕрлĕрен тасамарлăхсене тытмалли сооруженисем тума палăртнă. Çаксене тума Канашри вагонсем юсакан заводпа Çĕмĕрлери экстракт тăвакан завода хушнă. Анчах та вĕсем ĕçе вăраха тăсса пыраççĕ.

Шупашкар хулине çитес çывăх вăхăтрах пĕтĕмĕшпех канализацилеме палăртнă. Çавăн пекех шывсене тасатса тăмалли станцисем те пулаççĕ. Анчах кунта пĕр çитменлĕх пур: таса мар шыв халлĕхе пĕтĕмпех Атăла юхса тухать. Ку вăл хуçалăха пысăк сиен кӳрет. Çак çитменлĕхе пĕтерме çитес çывăх çулсенчех мерăсем йышăнас пулать.

Шупашкар — промышленноçлă тата культурăллă пысăк хула. Хулари çынсене тăтăшах пахча çимĕç парса тăма хула çывăхĕнчи хуçалăха аталантарса пыни кирлĕ. Паллах, пахча çимĕç лартса ӳстерме нумай шыв кирлĕ, анчах халлĕхе вăл çук-ха.

Çӳп-çап, тислĕк пухма хула тулашĕнче ятарласа вырăн тусан аван пулнă пулĕччĕ.

Çурт-йĕр строительствинче, халăха шыв парса тăрас тата хуласемпе рабочи поселокĕсене, çавăн пекех район центрĕсемпе ялсене таса тытас ĕçре санитари нормисене тĕрĕс пурнăçласа пыни кирлĕ.

А. КОШЕЧКИН.

Кинотеатр тăваççĕ

Çĕрпӳре Карл Маркс урамĕнче кинотеатр тума тытăннă. Халĕ кунта куллен хĕрӳллĕ ĕç пырать. Театрта 150 çын вырнаçмалăх зал пулать.

П. АЛЕКСЕЕВ.

Вăрман промышленноçĕнче ялан ĕçлекен рабочисем çителĕклĕ пулмалла

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ вăрман промышленноçĕ халăх хуçалăхĕн ӳсĕе пыракан ыйтăвĕсенчен юлса пынине пĕтерме, вăрман хатĕрлес ĕçе сезонпа туса пынине чакарма палăртрĕ. Çакна пурнăçласси вăрманпромхозсене ялан ĕçлекен рабочисен кадрĕсем çителĕклĕ панинчен нумай килет. Партипе правительство вăрман промышленноçне пысăк пулăшу параççĕ. Вăрманпромхозсем ... чи хăватлă техникăпа хĕçпăшалланнă. Йывăç турттарма паха çулсем чылай хывнă. Ĕлĕкрех сĕм вăрман пулнă вырăнсенче илемлĕ поселоксем ӳсе çитĕнчĕç.

Ялан ĕçлекен рабочисем çитменни вăрманпромхозсене механизмсемпе туллин усă курма, государство заданийĕсене чыслăн пурнăçласа пыма чăрмантарать. Рабочисем çителĕклĕ пулсан, вăрман хатĕрлемелли плана колхозниксене вăхăтлăха хутшăнтармасăр та тултарма май пулнă пулĕччĕ. Çавăнпа вăрманпа хут промышленноçĕн предприятийĕсем валли ялан ĕçлеме рабочисем ытларах хатĕрлеме тăрăшмалла.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн организованнăй йĕркепе рабочисем пухакан пайĕ хăйĕн умĕнче тăракан задачăна япăх пурнăçлать. Вăл вăрманпа хут промышленноçĕнчи предприятисем валли рабочисем пухмалли çур çулхи плана 62 процент çеç тултарнă. «Чувашлес» треста пăхăнса тăракан вăрманпромхозсене вара тата сахалтарах, 39 процент çеç рабочисем ăсатнă.

Çакăншăн организованнăй йĕркепе рабочисем пухакан пай (начальникĕ Салмин юлташ) ответлă. Вăл районсенчи уполномоченнăйсене оперативно ертсе пымасть, вĕсен пуçарулăхне ӳстерме, малта пыракансен опычĕпе меслетне пĕтĕçтерсе сарма тăрăшмасть. Салмин юлташ ĕçе кирлĕ пек йĕркелеме, уполномоченнăйсен ответлăхне хăпартма тăрăшманнине кăтартакан тĕслĕхсем сахал мар. Нумаях пулмасть Чурачăк райисполкомĕ, государство панă задание пурнăçлас ĕçе хăвăртлатас тесе, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн организованнăй йĕркепе рабочисем пухакан пайĕнчен пулăшу ыйтнă. Анчах райисполком ыйтнине Салмин юлташ шута илмен.

Сĕнтĕр районĕнчи уполномоченнăй Клопов юлташ, Комсомольски районĕнчи уполномоченнăй Алеев юлташ япăх ĕçлеççĕ, плана тултармаççĕ, апла пулин те рабочисем пухакан пай вĕсен ĕçне лайăхлатма тăрăшмасть.

1953—1954 çулсенчи кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрленĕ тата сулă юхтарнă çĕрте ĕçлеме рабочисем организованнăй йĕркепе пухас ĕç те республикăра çителĕксĕр пырать. Рабочисем пухакан пайăн уполномоченнăйĕсем тата вăрманпромхоз директорĕсен кадрсем енĕпе ĕçлекен заместителĕсем нумайăшĕ çак ĕçе пуçăнман та. Хăшпĕр районсенче чăн та договорсем тума тытăннă, анчах ĕç вăраххăн пулса пырать.

Колхозниксемпе договор тунă чухне вĕсене аванс шучĕпе укça памалла. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн рабочисем пухакан пайĕ çак йĕркене пăсать, вăл хăйĕн уполномоченнăйĕсене аванс шучĕпе укça пама хушман. Октябрьски районĕнче чылай колхозниксем договор тунă, анчах вĕсене укça паман.

Вăрман промышленноçĕ валли рабочисем пухмалли плана тултарассишĕн райсовет исполкомĕсем те ответлă. Улатăр, Канаш, Етĕрне, Муркаш тата Чкаловски райисполкомĕсем государство панă задание пурнăçласси çинчен хăйсен ларăвĕсенче сӳтсе явман. Чурачăк, Шăмăршă тата Элĕк райисполкомĕсем хăйсем йышăннă решение ял Совечĕсене ярса паман.

Уйрăмах вăрман промышленноçне ĕçлеме каякансене правительство мĕнле çăмăллăх пани çинчен, пилĕк çуллăх плана тултарма Тăван çĕршыва йывăç материалсем мĕн тери кирли çинчен ĕçсыннисене япăх ăнлантарса параççĕ. Агитаторсем, ялти активистсем нумайăшĕ çак ĕçе хутшăнман. Вăрман промышленноçĕнчи рабочисем мĕнле условисенче пурăнни тата ĕçлени çинчен калакан плакатсем кашни районтах пур. Сĕнтĕрпе Комсомольски районĕсенче çав плакатсем уполномоченнăйсен кантурĕсенче выртаççĕ. Вулав çурчĕсемпе ялти клубсем нумайăшĕ агитацилле-массăлла ĕçрен пăрăнса тăраççĕ. Вулав çурчĕсемпе клубсенче докладсемпе калаçусем ирттермеççĕ, плакатсем, литература сахал. Çавăнпа та ĕнтĕ вăрман промышленноçне договор тăрăх ĕçлеме каякансене правительство мĕнле çăмăллăх пани, ăçта ĕçлемелли, ĕçленĕшĕн мĕн чухлĕ тӳлени, пурăнма, канма, техникăна алла илме мĕнле условисем туса пани çинчен нумай колхозниксем пĕлмеççĕ.

КПСС райкомĕсемпе пуçламăш парторганизацисем вăрман промышленноçĕ валли рабочисем пухас, кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра ĕçлеме договорсем тăвас ĕçе ертсе пыма, коммунистсемпе комсомолецсене, агитаторсемпе пропагандистсене анлăн хутшăнтарма тивĕçлĕ. Вĕсен Советсен вырăнти органĕсен тата рабочисем пухакан пайĕн уполномоченнăйĕсен ĕçне тăтăшах тĕрĕслемелле, йывăрлăхсемпе çитменлĕхсене пĕтерме пулăшмалла. Ял Совечĕсенче, вулав çурчĕсемпе клубсенче, колхоз правленийĕсенче плакатсемпе лозунгсем, пилĕкмĕш пилĕкçуллăх çинчен ятарласа тунă витринăсем пулччăр. Пропагандистсем, докладчиксем, агитаторсем, ялти активистсем партипе правительство вăрман промышленноçне аталантарассине пысăка хуни, ăна хăватлă техникăпа хĕçпăшаллантарни, йывăç хатĕрлекенсем валли ĕçлеме тата пурăнма лайăх условисем туса пани çинчен тĕплĕн ăнлантарса пама тивĕç.

Вăрманпромхозсемпе «Чувашлес» трест руководителĕсен рабочисене тулли кăмăлпа кĕтсе илмелле, вĕсем валли тухăçлă ĕçлеме, лайăх пурăнма мĕн кирлине пурне те туса хумалла. Пурăнмалли çуртсем, столовăйсемпе магазинсем лартма, кивvисене юсама вăрманпромхозсене укçа-тенкĕ çулсеренех нумай уйăрса параççĕ. Анчах чылай вăрманпромхозсем çав укçа-тенкĕпе кирлĕ пек усă курмаççĕ. Кĕркуннепе хĕллехи сезона уйрăмах Пăрачкав, Приволжски, Буински тата Шăмăршă вăрманпромхозĕсем япăх хатĕрленеççĕ. Приволжски вăрманпромхозра вăрман касмалли кварталсемпе пурăнмалли çуртсем хушши 15—20 километр. Вăрманпромхоз директорĕ Григорьев юлташ общежитисурчĕсене касма палăртнă вăрман çывăхне куçарса лартма тăрăшмасть. Пăрачкав вăрманпромхозĕнче çĕнĕрен пыракан рабочисене вырнаçтарма пурăнмалли çуртсем çук.

«Чувашлес» тресчĕ [illegible] ĕçне вăхăтлăха туса тăракан [illegible] юлташ) вăрманпромхозсем çĕнĕ рабочисем йышăнма хатĕр маррине пĕлмест мар, апла пулин те çак ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме тăрăшмасть. Трестăн пурăнмалли çуртсем, столовăйсемпе магазинсем тăвас тата киввисене юсас ĕç мĕнле пынине куллен тĕрĕслесе тăмалла, вăрманпромхозсене пулăшу ытларах памалла, руководительсен ответлăхне ӳстермелле.

Кастерсен, технорукĕсен, вăрман пункчĕсен начальникĕсен çĕнĕ рабочисене производство условийĕсемпе паллашма, техникăна алла илме, стахановецсен ĕç меслĕпе усă курма тимлĕ пулăшмалла. Техникăна вĕрентме кружоксем, курссем ятарласа организацилени, çамрăксене опытлă рабочисем çумне çирĕплетни, агитаторсем хаçатсемпе журналсем вуласа пани, çĕнĕ хыпарсем çинчен тăтăшах каласа пани, производствăлла канашлусем ирттерни— çаксем вĕсем пурте рабочисене ĕçе хăвăрт хăнăхтарма пулăшакан майсем пулаççĕ.

1952—1953 çулсенчи кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра чылай вăрман пункчĕсенче рабочисем ĕçленĕ вырăна вĕри апат илсе пырассине йĕркелеменччĕ. Улатăрти вăрманпромхоз ОРС-ĕн начальникĕ Мансуров юлташ, Йĕпреçри вăрманпромхоз ОРС-ĕн начальникĕн заместителĕ Степанов юлташ, «рабочисем вĕри апат çиесшĕн мар» тесе, хăйсен çаврăнăçусăрлăхне витме пăхасшăн. Çавăн пек шухăшлани сиенлĕ пулнине пурте пĕлеççĕ.

РСФСР Вăрманпа хут промышленность министерствин Чăваш республикинчи УРС-ĕн (начальникĕ Никандров юлташ), вăрманпромхозсенчи ОРС-сен сутă-илӳ тăвас ĕçе тата столовăйсен ĕçне лайăхлатма татăклă мерăсем йышăнас пулать. Рабочисем нумайăн пурăнакан тата ĕçлекен вырăнсенче котлопунктсем, ларексем уçмалла, автомашинăсемпе тата лавсемпе таварсем илсе кайса сутассине йĕркелемелле. Магазинсемпе ларексенче промышленность таварĕсем, апат-çимĕç кулленех çителĕклĕ пулччăр. Уйрăмах рабочи поселокĕсене çĕрулмипе пахча çимĕç çителĕклĕ кӳрсе килес ĕçе йĕркелени кирлĕ.

«Чувашлес» треста пăхăнса тăракан вăрманпромхозсем, Çĕмĕрлери вăрманпромхозсăр пуçне, йывăç хатĕрлемелли çур çулхи плана тултараймарĕç, Тăван çĕршыв умĕнче пысăк парăма кĕчĕç. Вăрманпромхозсенчи парти, профсоюз тата хуçалăх организацийĕсен малта пыракан техникăна татти-сыпписĕр ĕçлеттерме, ĕç тухăçлăхне ӳстерме, çулталăкри плана пур кăтартусем тăрăх та ăнăçлă тултарма коллективсене мобилизацилемелле. Çавăнпа пĕрлех рабочисем илес, вĕсене воспитани парас, социализмла ăмăртăва хутшăнтарас, кашни рабочие тухăçлă ĕçлеме паха условисем туса парас тĕлĕшпе те хăйсен ответлăхне ӳстермелле.

Ĕç ăнăçлăхне партилле-политикăлла тата партилле-организацилле ĕçе йĕркелени татса парать. Çакна вăрманпромхоз директорĕсен политика енĕпе ĕçлекен заместителĕсен тата партбюро секретарĕсен яланах асра тытмалла. Çуллахи вăхăтра рабочисем тулта ытларах пулма тăрăшаççĕ. Агитаторсемпе пропагандистсен хăйсен ĕçне вырăнти условисене шута илсе туса пымалла.

Кăçал вăрманпромхозсем çĕнĕ машинăсемпе механизмсем чылай туянчĕç, стахановецсен, производство новаторĕсен хисепĕ ӳсрĕ, рабочисен хастарлăхĕ пысăк. Çакă вăл вăрманпромхозсене пурне те çулталăкри плана ăнăçлă тултарма май парать. Çав паха майсемпе тĕрĕс усă курни, партипе государство дисциплинине çирĕплетни, ĕçре пуçарулăх пулни çеç кирлĕ.

Н. АЛБУТОВ,
КПСС обкомĕн промышленноçпа транспорт пайĕн заведующийĕн заместителĕ.

Июнь уйăхĕнче Италире депутатсен палатине суйланă. Суйлавра коммунистсем пысăк çĕнтерӳ тунă. Коммунистсен партийĕн кандидачĕсемшĕн суйлавçăсем 6,1 миллион сын сасăланă. Оппозицири группировкăсем мĕнпур сасăсен 50,2 процентне пухнă. Ку вăл христианла-демократсен блокĕн планĕсем путланса ларнине пĕлтерет. Суйлавра демократилле партисем çĕнтернĕшĕн халăх массисем хĕпĕртенĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Рим хулинчи ĕççыннисем «Унита» хаçат редакцийĕн çурчĕ умĕнче. Вĕсем суйлавра демократилле партисем çĕнтерӳ тунине пĕлсе савăнаççĕ.

Итали халăхĕ мирпе социальнăй улшăнусен правительстви туса хума ыйтать

РИМ, июлĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ хаçатсем халăх хушшинче мирпе социальнăй улшăнусен правительстви туса хурассишĕн кĕрешӳ анлăн сарăлса пыни çинчен пĕлтереççĕ.

«Аванти» хаçат сырнă тăрăх, социалистсен партийĕн парламентри ушкăнĕ ĕççыннисенчен нумай резолюцисем, сырусем, телеграммăсем илсе тăрать. Халăх депутатсемпе сенаторсенчен политикăлла лару-тăрăва тĕпрен улăштарма ыйтать. Çак резолюцисен копийĕсене республика президенчĕ Эйнауди тата де Гаспери патне ярса панă.

Болонья хулинчи пекарньăсенче ĕçлекенсем де Гаспери, Тольятти, Ненни патне çыру янă. Вĕсем правительствăна халăх вăйĕсен представителĕсем кĕмелле тăвас пулать, теççĕ. Çак правительствăн çĕршыври лару-тăрăва çăмăллатмалла, тĕнчери мĕнпур çĕршывсем хушшинче экономикăлла çыхăнусене тата халăхсем хушшинчи туслăха тĕреклетмелли политика тытса пымалла.

Рим хулинчи ĕççыннисен нумай йышлă делегацийĕсем сенат бюровĕпе депутатсен палатине пырса çакăн пек ыйтса çырнă резолюцисем парса хăвараççĕ.

Фусиньри çĕр кăмрăк шахтисенче

ПЕКИН, июлĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентстви çапла пĕлтерет:

Çурçĕр Хĕвелтухăç Китайри Фусинь çĕр кăмрăк шахтисем çĕршывра çĕр кăмрăкĕ кăларакан пысăк центрсенчен пĕри пулса тăраççĕ. Кăçал Фусиньри горняксем 1949 çулхинчен икĕ хут ытларах çĕр кăмрăкĕ кăлараççĕ. Фусиньри çĕр кăмрăк районĕ Китайри çĕр кăмрăкĕ кăларакан ытти районсем хушшинче виçççĕмĕш вырăн йышăнать. Вăл Çурçĕр Хĕвелтухăç Китайри Фушунь тата Çурçĕр Китайри Кайлань шахтисенчен кăшт кăна кайра тăрать.

Кăçал Фусиньре капитальнăй ĕçсем, иртнĕ тăватă çул хушшинче тунă ĕçсемпе танлаштарсан, 80 процент чухлĕ пулаççĕ. Кунта июлĕн 1-мĕшĕнче ĕçлеме тытăннă шахтăсăр пусне тата пĕтĕмпех механизацилесе çитернĕ шахта ĕçлеме пусăать.

Кăçал Фусиньре политехника училищи уçăлать. Унта 2 пин студент вĕренет. Çавăн пекех квалификациллĕ горняксем вĕрентсе хатĕрлекен шкул уçăлать.

Пĕрремĕш пилĕкçуллăх вĕçленнĕ тĕле Фусинь çĕр кăмрăк промышленноçĕнчи пысăк центрсенчен пĕри пулса тăрать. Кунта пурăнакан çынсен шучĕ 300 пине çитет. Шахтăсенче пĕтĕм ĕçе механизацилесе çитереççĕ.

Совет Союзĕ техника енĕпе пулăшу панипе Фусинь хăвăрттăн аталанса пырать. 1948 çулхипе танлаштарсан, рабочисен шучĕ 5 хут ӳснĕ. Шахтăсенчи ĕçе 74 процент таран механизациленĕ.

Шахтерсен ĕç укçи, 1949 çулхипе танлаштарсан, 167 процент ӳснĕ. Шахтерсем валли кану çурчĕсем уçнă. Вĕсем çĕршыври чи лайăх курортсенче хăйсен сывлăхĕсене тĕреклетеççĕ.

Китайри Коммунистсен партийĕн йышĕ ӳсет

ШАНХАЙ, июлĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). «Дачжунжибао» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, юлашки вăхăтра Коммунистсен партийĕн Шаньдун провинцийĕнчи организацийĕн йышĕ чылай ӳснĕ. Иртнĕ çулхи июль уйăхĕнчен пуçласа ку тарана çитиччен Цзинань хулинче Китайри Коммунистсен партине 2.245 çын кĕнĕ. Вĕсем—хулари заводсенче, фабрикăсенче, государство учрежденийĕсенче, аслă шкулсенче ĕçлекен тата вĕренекен чи лайăх çынсем.

Çав хаçат пĕлтернĕ тăрăх, юлашки вăхăтра Циндао хулинче Коммунистсен партине 669 çын кĕнĕ. Вĕсенчен 578 çын промышленность предприятийĕсенче ĕçлекен рабочисем. Хальхи вăхăтра партие кĕме ыйтса тата 400 çын заявлени панă.

В. И. Ленин Сочиненийĕсен 32-мĕш томне Венгри чĕлхипе пичетлесе кăларнă

БУДАПЕШТ. (ТАСС). «Сикра» издательстви В. И. Ленин Сочиненийĕсен 32-мĕш томне Венгри чĕлхипе 50 пин экземпляр пичетлесе кăларнă. Ку тома В. И. Ленин 1920 çулхи декабрĕн 30-мĕшĕнчен пуçласа 1921 çулхи январĕн 14-мĕшне çитиччен çырнă ĕçсем кĕнĕ.

Корейăри ĕççем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, июлĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: иртнĕ кун хушшинче фронтсенче улшăнусем пулман.

Лисынмановецсем çĕнĕ провокаци хатĕрлеççĕ

СИНЬХУА АГЕНТСТВИН КОРРЕСПОНДЕНЧĔ ПĔЛТЕРНИ

ПЕКИН, июлĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран июлĕн 5-мĕшĕнче пĕлтернинче çапла каланă:

Ли Сын Ман тыткăнри ытти çар çыннисене вăйпа тытса чарма хатĕрленнĕ вăхăтра, гоминдан вăрă-хурахĕсем унпа пĕрле тыткăнри Китай халăх добровольцĕсене вăйпа тытса чарма плансем хатĕрлеççĕ.

Интернейшнл ньюс сервис агентстви пĕлтернинче çапла каланă: июлĕн 4-мĕшĕнче ирхине Ли Сын Ман хăй Робертсонпа тĕл пуличчен гоминданăн Кăнтăр Корейăри представителĕпе Ван Тунюаньпе канашланă. Вĕсем хальхи вăхăтра Чечжудо утравĕ çинче тăракан тыткăнри Китай халăх добровольцĕсем çинчен сӳтсе явнă.

Ли Сын Ман «ирĕке кăларнă» тыткăнри Китай халăх добровольцĕсем халĕ те Пусанрах гоминдан агенчĕсемпе Ли Сын Ман полицийĕ аллинче тăраççĕ. Чечжудо утравĕ çинчи тыткăнри салтаксен, тӳрех хăйсен тăван çĕршывне тавăрса паман Китай халăх добровольцĕсен ячĕпе законсăр хăтланса, гоминдан агенчĕсем ĕнер Ли Сын Ман патне тыткăнри çак çар çыннисене Тайвань утравĕ çине яма ыйтса çыру янă.

Халĕ ĕнтĕ Ли Сын Манпа Чан Кай-ши тыткăнри Китай халăх добровольцĕсене вăйпа тытса чарма хатĕрленĕ планĕ пуриншĕн те паллă пулса тăчĕ. Корейăпа Китай енĕ лисынмановецсемпе гоминдановецсене çак плана пурнăçлама кансĕрлес тĕлĕшпе Америка мĕн те пулин тума пултарасса питĕ тимлĕн асăрхаса тăрать.

ПЕКИН, июлĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран çапла пĕлтернĕ:

Кунта лисынмановецсем перемири тăвассине чарса лартас тĕлĕшпе çĕнĕ провокаци хатĕрленине питĕ тимлĕн асăрхаса тăраççĕ. Америкăри информаци агентствисем хăйсен пĕлтерĕвĕсенче перемири тăвас ĕçе чарса лартас тĕлĕшпе Ли Сын Ман хатĕрленĕ план çинчен каласа параççĕ. Ку план икĕ пунктран тăрать: 1) перемири çинчен килĕшӳ тума чăрмантарас тĕлĕшпе Корея Халăх çарĕн тыткăнри ытти 8 пин çар çыннине «ирĕке кăлармалла», 2) перемири çинчен килĕшӳ тăвас пулсан, никам пырса кĕмелле мар зонăна хупăрласа тăракан демаркаци линийĕ патĕнче хăйсен çарĕсене илсе каймалла мар.

Ли Сын Манпа унăн представителĕсем перемири ĕçне чарса лартмалли план çинчен уççăнах калаççĕ. Пĕрлешӳллĕ Штатсем Ли Сын Ман каварне хирĕç татăклă мерăсем йышăнас мар пулсан, вĕсем çакна кăтартса парĕç: Америка командованийĕ Ли Сын Мана тата унăн мире хирĕçле планĕсене хĕтĕртсе тăрать. Ли Сын Ман американецсем ирĕк панипе тыткăнри çар çыннисем çинчен тунă килĕшĕве пăсни куç умĕнчех. Перемири тăвасси çинчен килĕшӳ тума хатĕрленесси чарăнса ларнăранпа 17 кун иртрĕ ĕнтĕ. «Ирĕке кăларнă» тыткăнри çар çыннисене ирĕксĕрлесе Ли Сын Ман çарне илеççĕ.

Ли Сын Ман ытларах та ытларах иртĕхет. Вăл перемири тăвассине уççăн хирĕç тăрать кăна мар. Вăл политикăлла конференци ĕçе тытăннă хыççăн 90 кун иртсен хĕçпăшаллă агресси пуçарса перемири çинчен тунă килĕшĕве пĕтерсе лартма тăрăшать.

Мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен Англи комитечĕн исполкомĕ пĕлтерни

ЛОНДОН, июлĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен Англи комитечĕн исполкомĕ хаçатсенче пичетлесе кăларма пĕлтерӳ панă. Пĕлтерӳре Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн нумаях пулмасть Будапештра пулса иртнĕ сессийĕ йышăннă решенисене ырлани çинчен каланă.

Юлашки эрнесем хушшинче, тенĕ пĕлтерӳре, çынсем çакна ытларах та ытларах ăнланса çитеççĕ: аслă державăсем хушшинче калаçусем ирттересси çинчен панă сĕнĕве пуринчен ытла США-ри ертсе пыракан ушкăнсем хирĕç тăраççĕ. Çав вăхăтрах ку сĕнĕве этемлĕхĕн пысăк пайĕ тата нумай правительствăсем йышăнаççĕ.

«Фостер Даллес каланă тăрăх,— тенĕ чĕнӳре,— Англи, Франци, Америка ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен Вашингтонра пулса иртекен канашлăвĕнче Хĕвелтухăç Европăра сивĕ вăрçа вăйлатмалли майсем çинчен сӳтсе явмалла. Çĕнĕ хăрушлăх туха тăчĕ. Тĕнчери ыйтусене мирлĕ майпа татса парас çул çине пысăк чăрмавсем туха тăма пултараççĕ».

Çавăнпа та мĕнле пулсан та Корейăра мир туса хумалла, Корейăри лару-тăру çинчен сӳтсе явма ООН Генеральнăй Ассамблейин сессине халех пухмалла. Çакăнпа пĕрлех Англи правительствин аслă державăсен пуçлăхĕсен конференцине пухмалли вăхăтпа вырăна палăртса парас тĕлĕшпе халех хăйĕн пуçарулăхне кăтартмалла.

Комитет миршĕн тăракан мĕнпур çынсене çак сĕнӳсене активлăн йышăнма чĕннĕ.

Бивен тухса калани

ЛОНДОН, июлĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 4-мĕшĕнче Ньютаунра пулса иртнĕ 4 пин çынлă митингра лейбористсен партийĕн членĕ, лейбористсен лидерĕсенчен пĕри Эньюрин Бивен хĕвеланăçĕнчи çĕршывсене «вырăссем патне сывхарма тата темиçе утăм тума» чĕннĕ.

Бивен çапла каланă: «вырăссем пĕтĕмĕшле мир туса хурас енĕпе малалла темиçе утăм ярса пуснине Америка правительстви ăнланмарĕ, пирĕн вырăссем енелле темиçе утăм ярса пусмалла».

Германи темиçе пая уйрăлса тăнă вăхăтра, тенĕ Бивен, Европăра мир туса хума çук. Хĕвеланăçăн, тенĕ вăл малалла, «хĕçпăшалсăрланнă тата нейтрализациленнĕ Германи пулнипе» килĕшес пулать.

Вăл çавăн пекех хĕçпăшалсăрланас ыйту тăрăх тĕнчери мĕнпур çĕршывсем хутшăннипе конференци ирттерме кирли çинчен каланă.

Японире кореецсене хĕсĕрлеççĕ

ПХЕНЬЯН, июлĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Корейăри тĕп телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Японин Иосида правительстви Японире пурăнакан кореецсене хытă хĕсĕрлеме пуçланă. Токиоран илнĕ хыпар тăрăх, Корейăри тĕп телеграф агентстви çапла пĕлтерет:

Токиори полици управленийĕнче ĕçлекен 80 полицейски Кото районĕнче пурăнакан кореецсен хваттерĕсем çине тапăннă. 9 корееца ниммĕнле сăлтавсăр арестлесе полици участокне илсе пынă. Çав кунхинех полици агенчĕсем Ода районĕнче тата 3 корееца арестленĕ. Июлĕн 2-мĕшĕнче Ибараги префектуринче полици агенчĕсем Онуси ялĕнче пурăнакан кореецсен хваттерĕсем çине тапăннă. 10 корееца арестленĕ, вĕсен пурлăхĕсене конфискациленĕ.

Япони влаçĕсен законсăр ĕçĕсем, Корейăри тĕп телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Японире пурăнакан кореецсене, çавăн пекех тата пĕтĕм Япони халăхне питĕ тарăхтарать.

Бонн бундестагĕ Саар çинчен тата Франците тӳлемелли парăмсем çинчен йышăннă решени

ЛОНДОН, июлĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ июлĕн 2-мĕшĕнче Бонран çапла пĕлтернĕ:

Хĕвеланăç Германи бундестагĕ (кĕçĕн палата): индустри тĕлĕшĕнчен пуян Саар облаçне Германие каялла тавăрса памалла, тесе пĕлтернĕ. Çак территори пирки Франципе Германи хушшинче пулас калаçусене иртермелли условисем çинчен калакан резолюцие ырланă хыççăн, бундестаг çапла пĕлтернĕ: Саар Германирен уйрăлса тăракан йĕркене пĕтермелле, тенĕ. Çак территори 1935 çултан пуçласа вăрçă иртиччен нимĕçсен контролĕнче тăнă. Хальхи вăхăтра Саар облаçĕ политика тĕлĕшĕнчен автономи илнĕ, анчах экономика тĕлĕшĕнчен Франципе сыхăнса тăрать.

Коммунистсемсĕр пусне ытти мĕнпур депутатсем ырласа йышăннă резолюци Аденауэр правительствине Саар çинчен калаçусене—Саар Германи çĕршывĕн пайĕ пулса тăрать, текен йĕрке тăрăх иртермелле тума хушать.

Рейтер агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Хĕвеланăç Германи бундестагĕ Франците парăм укçи тӳлесси çинчен калакан закона пăрахăçа кăлармалла тунă. Бундестагра парăмсем çинчен Лондонра февралĕн 27-мĕшĕнче алă пусса йышăннă килĕшĕве иккĕмĕш хут пăхса тухнă. Çак килĕшӳ тăрăх, Хĕвеланăç Германи заем укçи тăрăх 1.191 миллион кĕренке стерлинг чухлĕ парăм тӳлеме килĕшнĕ. Ку килĕшӳ çине 19 çĕршыв, вăл шутра Англи, Франци, Пĕрлешӳллĕ Штатсем алă пуснă.

Бундестаг Хĕвеланăç Германипе Франци хушшинче вăрçă хыççăн Хĕвеланăç Германие экономика енĕпе панă пулăшу пирки Франци правительстви тăратнă ыйтусене йĕркелесси çинчен тунă килĕшĕве сирсе пăрахнă. Франци 15.800 пин доллара яхăн укçа шыраса илме шутлать.

Çав вăхăтрах бундестаг, иккĕмĕш хут пăхса тухса, Лондонра алă пусса йышăннă килĕшĕвĕн ытти пайĕсене, çавăн пекех Хĕвеланăç Германипе Англи, Хĕвеланăç Германипе Пĕрлешӳллĕ Штатсем, Хĕвеланăç Германипе Дани хушшинче тунă килĕшӳсене йышăннă.

Анчах та тепĕр кунне, июлĕн 3-мĕшĕнче, бундестаг хăйĕн решенине тепĕр хут пăхса тухнă, Хĕвеланăç Германи Франци тăратнă ыйтусене йĕркелес тĕлĕшпе Франципе тунă килĕшĕве çирĕплетесси çинчен 190 сасăпа закон проекчĕ йышăннă. 147 сасă хирĕç пулнă, 11 депутат сасăламан.

Кенири лару-тăру

ЛОНДОН, июлĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Накуруран (Кени) пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 5-мĕшĕнче Накуру районĕнче çарсем, полици тата вырăнти оборона отрячĕсем 10 пин яхăн негра хупăрласа илнĕ. Çавăнта бронемашинăсем те хутшăннă.

Пин ытла негра допрос тума тесе Накуру хули хĕррине вырнаçнă лагере тытса кайнă.

Совет шахматисчĕсен команди Нью-Йорка тухса кайнă

Америкăри шахмат федерацийĕ ыйтнă тăрăх, Пĕтĕм тĕнчери шахмат федерацийĕн президенчĕ Ф. Рогард Пĕтĕм Союзри шахмат секцине кăçалхи июль уйăхĕнче Нью-Йоркра СССР шахматисчĕсемпе США шахматисчĕсем хушшинче матч иртермелле тăвасси çинчен сĕнӳ тăратнă.

Пĕтĕм Союзри шахмат секцийĕ Пĕтĕм тĕнчери шахмат федерацийĕ урлă Америка федерацине совет шахматисчĕсен команди Америка шахматисчĕсен командипе тĕл пулса вылямa килĕшни çинчен пĕлтернĕ.

Июлĕн 6-мĕшĕнче Мускавран Нью-Йорка Совет Союзĕн шахмат команди самолетпа кайнă. Совет командине çаксем кĕреççĕ: гроссмейстерсем—М. Ботвинник, П. Керес, В. Смыслов, И. Болеславский, А. Котов, Е. Геллер, М. Тайманов, А. Толуш; запасри шахматистсем: Т. Петросян тата Ю. Авербах. Совет делегацийĕн руководителĕ В. Кеменов, команда капитанĕ—гроссмейстер В. Рагозин, тренер-гроссмейстер И. Бондаревский.

Илнĕ сведенисем тăрăх, США командине çаксем кĕреççĕ: гроссмейстерсем—С. Решевский тата Р. Файн, мастерсем—Л. Эванс, Р. Бирн, Г. Крамер, И. Горовиц, А. Денкер тата М. Павей; запасри шахматистсем: мастерсем—А. Бисгайер тата А. Дейк.

Совет Союзĕпе США командисем хушшинчи шахмат вăййинче тăватă тур пулать. Кашни хăйĕн хăми çинче тăватă парти вылять. Вăйă июлĕн 15-мĕшĕнче пуçланать.

„Агитатор блокночĕн" черетлĕ номерĕ

КПСС Чăваш обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ кăларакан «Агитатор блокночĕн» черетлĕ, 13-мĕш номерĕ пичетленсе тухрĕ. Унта П. Кузьминская сырнă «Общественăлла выльăх-чĕрлĕх валли апат ытларах хатĕрлер» ятлă статья; Шупашкарти лента тĕртекен фабрикăри парторганизаци секретарĕ М. Мочалов юлташ фабрика коллективĕ продукци пахалăхне ӳстерессишĕн кĕрешни çинчен каласа пани; ют çĕршывсене тара кĕрĕшнĕ çынсен Берлинри авантюри путланса ларни çинчен калаçу иртермелли материал пичетленнĕ.

Кунсăр пуçне калаçура усă курма ССР Союзĕнчи физкультурăпа спорт çитĕнĕвĕсене кăтартакан цифрăсемпе фактсем пур.

ТИМĔР-ТĂМĂР ПУХАÇÇĔ

КАНАШ. Хулари предприятисемпе организацисем тата шкулсем тимĕр-тăмăр пухмалли çур çулхи задание 120 процент тултарнă. Ку тĕлĕшпе уйрăмах заготзернора, промкомбинатра, текстильсбытра ĕçлекенсем лайăх тĕслĕх кăтартрĕç.

К. ПЛАТОНОВ.

СĔНТĔР. Районти колхозсем ытти ялхуçалăх ĕçĕсене тунă хушăрах тимĕр-тăмăр чылай пухаççĕ. Çак кунсенче «Ударник» колхоз 3.020 килограмм, Калинин ячĕпе тăракан колхоз—2.190 килограмм, «Знамя» колхоз—1.260 килограмм, Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз 1.220 килограмм, «Передовик» колхоз—1.180 килограмм тимĕр-тăмăр пухнă. Районта пурĕ 30 тонна ытла тимĕр-тăмăр пухса государствăна панă.

П. ОСИПОВ.

ПАЯН «СОВЕТСКАЯ ЧУВАШИЯ» ХАÇАТРА

Умстатья:—Утă çулас тата силос хывас ĕçе хăвăртлатар.

Тăван çĕршывра.

В. Алексеев.—Колхоз председателĕсемпе ĕçлесси çинчен.

В. Большов. — Строительсем хушшинчи массăлла-политикăлла ĕçе вăйлатмалла.

КПСС Советски райкомĕн пленумĕ.

Общественăлла выльăх-чĕрлĕх валли утă та силос ытларах хатĕрлер!

И. Сидоркин.—Пĕр кивĕ йăла çинчен.

В. Федоров.—Çывăхри тата Вăтаçĕрти Хĕвелтухăçĕнче Англипе Америка нефтьшĕн кĕрешни.

Вырăнти тата урăх çĕршывсенчен килнĕ информаци.

Редактор заместителĕ М. Н. ЯКИМОВ.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ — Кизел хулинчи драма театрĕн гастролĕсем. Июлĕн 8-мĕшĕнче **«Двенадцатая ночь»** (4 пайлă комеди). Июлĕн 9-мĕшĕнче **«Ночной звонок»** (4 пайлă комеди).

Спектакльсем 20 сехет те 30 минутра пуçланаççĕ.

КИНО

«РОДИНА» — июлĕн 8-мĕшĕпе 9-мĕшĕнче 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеанссенче **«По щучьему веленью»**, ытти сеанссенче — **«В одном универмаге»**. Сеанссем 16 сехетре, 18 сехет те 15 минутра, 20 тата 22 сехетре пуçланаççĕ.

«Россглаввинон» Шупашкарти эрех комбиначĕ колхозсене, организацисене тата уйрăм гражданасене сакăн çинчен пĕлтерет: **комбинат тĕрлĕрен улма-çырла кирек мĕн чухлĕ те сутăн илет; укçине çийĕнчех тӳлесçĕ.**

Улма-çырлана çак пунктсенче йышăнаççĕ:

Шупашкар хулинче — Коммунальнăй слободари 27-мĕш çуртра;

Сĕнтĕрвăрри хулинче — винпромра;

Улатăр хулинче — эрех заводĕнче.

ДИРЕКЦИ.

Врач канашĕсем

Ӳт-тир чирĕсемпе кĕрешесси

Ӳт-тир чирĕсем çынна ĕç вăхăтĕнче пысăк чăрмав кӳреççĕ. Çав чирсем сарăлса кайсан, çын пурнăçне пысăк сиен кӳме пултараççĕ. Çавăнпа та ӳт-тир чирĕсемпе кĕрешесси пысăк та ответлă ĕç пулса тăрать.

Ялхуçалăх ĕçĕсен хăйсен уйрăмлăхĕ пур: колхозниксем пĕр вырăнта çеç мар, тĕрлĕ çĕрте ĕçлеççĕ, медицина учрежденийĕсенчен инçетре пулаççĕ. Çавăнпа та ялхуçалăхĕнче ĕçлекенсен ӳт-тир чирĕсемпе мĕнле кĕрешмелли çинчен хăйсен лайăх пĕлмелле.

Ӳт-тир чирĕсен микробĕсем нумай çĕрте тĕл пулаççĕ. Вĕсем сывлăшра, шывра, типĕ çĕр çинче пурăнаççĕ. Сывă çынăн ӳт-тирĕ çинче кашни тăваткал сантиметрта 40 пине яхăн микроб пулать. Çак микробсем организма нии сиен кӳмесĕрех чылай вăхăт хушши пурăнма пултараççĕ. Вĕсене пурăнма услови лайăхлансанах микробсем питĕ хăвăрт ĕрчеççĕ, çапла вара çын чирлеме пултарать.

Ӳт-тир çинчи пӳрлĕ шатрасем, çăпансем, шыçса хăпарнă мăкăльсем çынна пысăк сиен кӳреççĕ. Пӳрлĕ шатрасем иртнин пирки, вĕсене çын нумай чухне сисмесĕрех юхать, вĕсем çине пăхмасть те. Çак пӳрлĕ шатрасенчен çăпан пуçланса кайма пултарать. Ӳт-тирĕн айĕнче хĕрлĕ тĕслĕ хытă мăкăль ӳссе пырать, вăл кайрантарах çемçелет, çак мăкăль шăтса юхать.

Çăпан ӳссе пынă чухне питĕ ыраттарать, çын чылай вăхăт хушши ĕçлейми пулать. Темиçе çăпан тухса ларнине фурункулез теççĕ. Темиçе фурункул юнашар, пĕр вырăнтах тухса ларсан кăвакхĕрлĕ тĕслĕ питĕ ыратакан шыçмак пулать, ăна карбункул теççĕ. Çак карбункул тухса ларсан, çын сивве шăнать, ун пуçĕ ыратать, температури ӳссе каять. Карбункул хăшпĕр чухне çынна вĕлерме те пултарать.

Хăшпĕр çынсен организмĕ чирсемпе лайăххăн кĕрешме пултарать, хăшпĕрисен организмĕсем вăйсăртарах пулнă май йывăр чирлеççĕ. Ӳт-тир нерв системи тăрăх çыннăн шалти органĕсемпе те çыхăнса тăрать. Çăмахран, фурункулезпа чирлесен диабет текен чирпе аптăракан çынсем час-часах чирлеççĕ. Сикекен чирпе чирленĕ çынсене çăпансем нумай тухма пултараççĕ, подагра текен чирпе тата ытлашши самăрланнипе аптăранан çынсем ӳт-тир чирĕсемпе час-часах чирлеççĕ.

Ӳт-тир чирĕсемпе чирлесси ӳт-пĕве ытлашши шăнтиничен е ăшăтниччен, апат-çимĕçре витаминсем çитеймесĕр пулниччен килет. Çыннăн ӳт-тирĕ сывă пулсан микробсем организма лекеймеççĕ, чирлеттерме пултараймаççĕ. Ӳт-тире кăштах сиенлетсен, сӳнĕ кĕрсен, пĕр-пĕр пĕчĕк шĕвĕр япалапа тире кăшт шăтарсанах пӳрлентерекен микробсем шалалла кĕрсе ĕрчеме пуçлаççĕ, çын чирлет. Пуринчен ытла питĕ пĕчĕк сурансем хăрушă темелле, мĕншĕн тесен вĕсене никам та асăрхамасть. Ӳт-тире вараланi, тусан ларни те тĕрлĕ чирсене сарма май парать.

Ялхуçалăх ĕçĕсене тунă çĕрте тусан нумай пулать. Çав тусан ӳт-тир, тумтир çине ларать, çапла вара çыннăн ал-урисем вараланаççĕ. Ӳт-тир таса мар пулсан, унта пурăнакан микробсем йышлăрах пулаççĕ.

Пӳрлентерекен чирсенчен сыхланас тесен, чи малтан ӳт-тире таса тытмалла, ăна суранланасран сыхламалла. Алла кашни кун виçĕ хутран кая мар супăньпе çумалла, чĕрнесене кĕскен касмалла, кăшни 7—10 кунта пĕрре мунча кĕмелле.

Уй-хир ĕçĕнче пулнă тумтире хывса хумалла та ӳт-пĕве ăшă шывпа çумалла. Сурансем пулсан, вĕсене иодпа сĕрмелле те таса тумтир тăхăнмалла. Ĕçленĕ чухне тĕрлĕ сурансем пулма пултараççĕ. Вĕсем çынна ĕçлейми тăваççĕ. Суранланнă ӳт-тире пӳрлентерекен микробсем ĕрчеме, пӳрлĕ шатрасемпе çăпансем тата шыçăсем пулма пултараççĕ. Çапла вара çын ĕçлейми пулать. Кун пек ан пултăр тесен, çак сурансене 5 процентлă иодпа е 1 процентлă бриллиантовăй зеленьпе сĕрмелле. Кашни уй-хир бригадинче санитари посчĕ тусан аван пулать. Постра медицина аптечки пулмалла.

Сурансене нихçан та хут татăкĕсемпе, тĕрлĕ ӳсентăран çулçисемпе витме, вараланчăк пусма татăкĕпе çыхма юрамасть.

Ялхуçалăхĕнче ĕçлекенсен аллисем час-часах кушăхса каяççĕ, çапла вара пӳрлĕ сурансем те пуçланса кайма пултараççĕ. Ал-ура кушăхнине И. Пайкин врач кăтартнă меслетпе пĕтерме пулать. Вăл меслет çапла тума хушать: ĕç хыççăн санитари уполномоченнăйĕ таз ăшне виçĕ литр ăшă шыв ярать, ун çине çур кăшăк нашатырнăй спирт хушать. Бригадăра ĕçлекен вăç-тăватă çын пĕрле 5 минут хушши аллисене çав шывра тытса тăраççĕ. Ун хыççăн алăсене марля татăкĕсемпе шăлса типĕтеççĕ те вазелин сĕреççĕ. Куллен çапла туса пырсан, алура кушăхса хытнă вырăнсем çемçелеççĕ, сурансем те часах тӳрленсе çитеççĕ.

МТС-семпе мастерскойсенче ĕçлекенсен, шоферсен аллисем тĕрлĕ çусемпе яланах вараланаççĕ. Çак çусене ахаль шывпа çуса тасатма питĕ хĕн. Яланах вараланакан ӳт-тир çинче тĕрлĕ пукрасем, пӳрлĕ шатрасем тухса лараççĕ. Алăсене лайăх çуса тасатас пулсан, В. А. Рахманов профессор шухăшласа тупнă пастăпа усă курмалла. Ку пастăна тума йывăр мар. Çур литр тăм, чĕрĕк литр таса хăйăр, чĕрĕк литр краçын илмелле те вĕсене питĕ лайăх хутăштармалла. Кĕленче савăта пĕр литр шыв ярса, унта 75 кубла сантиметр сернăй кислота хушмалла. Кислотана шыв çине пĕчĕккĕн ямалла. Апла тунасан вăл сирпĕнсе куçа кĕме пултарать. Çапла икĕ савăтра тунă япаласене хуллен хутăштармалла. Тăмлă-хăйăрлă шĕвек çине кислота янă чухне йывăç патакпа пĕрмай пăтратса тăмалла. Çапла вара тусан питĕ лайăх паста пулса тăрать. Ăна йывăç каткара витсе усрамалла. Çак пастăна кăшт илсе шывпа йĕпетсе алла сĕреççĕ те унтан сивĕ шывпа çăваççĕ. Çакăн пек виçĕ хут çусан алăсем таса пулаççĕ.

Ӳт-тире пӳрлентерекен чирпе чирлесен çийĕнчех врач патне каймалла. Чире килти тĕрлĕ майсемпе пĕтерме хĕн. Çулçăсем, курăксем, ăшăтакан компрессем хурса сывалма тăрăшни сывлăха сиен кӳме çеç пултарать. Пӳре пăчăртаса кăларма юрамасть, мĕншĕн тесен çак пӳр вараланнипе пĕчĕк шатраранах çăпан ӳссе çитĕнме пултарать. Çăпансем шăтса юхнă вăхăтра мунчара çăвăнма юрамасть: микробсем ӳт-пĕвĕн пĕр пайĕнчен тепĕр вырăна лексе çĕнĕ шатрасемпе çăпансем пуçласа яма пултараççĕ.

Пӳрлĕ кĕпе-йĕмре микробсем çаплипех юлаççĕ, çавăнпа та кĕпе-йĕме лайăх çуса шывра вĕретмелле, кайран вĕри утюгпа якатмалла.

Совет государстви ĕççыннисен сывлăхĕшĕн куллен тăрăшать. Халăх сывлăхне сыхлас ĕçе лайăхлатма çулленех укçатенкĕ нумай уйăрса парать. Пирĕн çĕршывра кашни çыннах тӳлевсĕр медицина пулăшăвĕ параççĕ. Апла пулсан та тĕрлĕ чирсемпе кĕрешес ĕçе ĕççыннисем хăйсем активлăн хутшăнни кирлĕ. Кашни çыннăн хăйĕн, çавăн пекех пĕтĕм коллективри çынсен сывлăхне сыхлама пĕлмелле.

Ӳт-тир чирĕсемпе кĕрешмелли майсене пурнăçласа пыма йывăр мар. Çак майсене пурнăçлани çынсене чирсенчен сыхлама, производствăра кашни кун пĕр чăрмавсăр ĕçлеме, халăх сывлăхне çирĕплетме пысăк пулăшу парать.

Врач Б. ПЛЕТНЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-90, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-04, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

ИТ 01167 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.